ПЕТЕМ ТЕНЧЕРИ ПРОЛЕТАРИСЕМ, ПЕРЛЕШЕР!

КОММУНИЗМ ЯЛАВĔ

Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн Чăваш обкомĕпе Шупашкар хула комитечĕн тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕпе Шупашкар хула Совечĕн хаçачĕ

1956 çул
Февраль
7
ЫТЛАРИКУН
№ 27 (9706)
Хакĕ 20 пус.
38-мĕш çул тухать.

Паянхи номерте:

К. Е. Ворошилов юлташ 75 çул тултарнă ятпа килнĕ саламлă телеграммăсем (1 стр.).
Мускава Китай Халăх Республикин делегацийĕ килнĕ (1 стр.).
Республикăри колхозсенче çĕрулмипе пахча çимĕç тухăçлăхне ÿстермелли майсене палăртаççĕ (1 стр.).
Совет Правительстви США Правительствине 1956 çулхи февралĕн 4-мĕшĕнче панă нота (2 стр.).
Совет Правительстви Турци Правительствине 1956 çулхи февралĕн 4-мĕшĕнче панă нота (2 стр.).
ПАРТИ ПУРНĂÇĔ: **П. Григорьев.**—Колхозниксен хастарлăхне ÿстерсе пыратпăр; **Ф. Петров.**—Коммунистсен пухăвĕнче (2 стр.).
А. Моисеенко.—Вăрман промышленноçĕнчи резервсемпе туллин усă курар (2 стр.).
КПСС XX-мĕш СЪЕЗЧЕ УМĔН. **Н. Герасимов.**—Ĕç вахтинче; **П. Павлов.**—«Аврора» колхоз ÿсĕмĕ (3 стр.).
Пĕтĕм Союзри ялхуçалăх выставкин участникĕсене премисемпе наградăсем пани (3 стр.).
А. Шаханов.—Тĕнчери лару-тăру (4 стр.).

Тăван çĕршыва йывăç ытларах хатĕрлесе парар!

Халăх хуçалăхне йывăç материалсем нумай кирлĕ. 1956—1960 çулсенче промышленность производствине, транспорта, ялхуçалăхне аталантарма, пурăнмалли çуртсем, шкулсем, больницăсем тата ытти культурăпа йăла учрежденийĕсен çурчĕсене туса лартма пĕтĕмпе 990 миллиард тенкĕ укçа хывмалла. Ялхуçалăх машинисем, груз турттармалли машинăсем, сĕтел-пукан, хутпа целлюлоза туса кăларасси хăвăрт ÿсет. Çавсене шута илсе ĕнтĕ ССР Союзĕн халăх хуçалăхне аталантармалли улттăмĕш пилĕк çуллăх план тĕлĕшпе КПСС XX-мĕш съезчĕ паракан Директивăсен проектĕнче вăрман промышленноçне малалла аталантарма, ăна пысăк тухăçлă, машинăсемпе механизмсем пама палăртнă. Вăрман хатĕрлекенсем, пĕтĕм совет халăхĕ пекех, çак историллĕ документа тулли кăмăлпа кĕтсе илчĕç, стройкăсене, предприятисене, ялхуçалăхне пĕрене, хăма, ытти материалсем ытлăн-çитлĕн парса тăма пулчĕç.

Çĕршыври вăрман промышленноçĕ государство планĕсемпе заданийĕсене вăхăтра пурнăçласа пырасси Чăваш АССР-ĕнчи йывăç хатĕрлекен организацисем ăнăçлă ĕçленинчен те сахал мар килет. Пирĕн вăрманпромхозсем çĕршыври çĕр кăмрăк промышленноçĕпе сăрт-ту промышленноçĕн шахтисемпе рудникĕсене, хутпа целлюлоза промышленноçĕн предприятийĕсене, стройкăсене çулсерен çĕршер пин кубометр паха йывăç ăсатаççĕ. Республикăра стандартлă çуртсем, экстракт, сĕтел-пукан, хăма, халăха кирлĕ йывăç япаласем чылай туса кăлараççĕ.

Облаçри парторганизацин XXVI-мĕш конференцийĕ республикăри вăрман промышленноçĕ юлса пынине, вăл государство çирĕплетсе паракан плансене çултан-çул тултарманнине палăртрĕ. Юлашки икĕ çул хушшинче «Чăвашвăрман» тресчĕ халăх хуçалăхне 373 пин кубометр йывăç парса çитереймен. 1955 çулта треста пăхăнса тăракан вăрманпромхозсенчен пĕри те çулталăкри плана тултарман.

Вăрман промышленноçĕ юлса пыни пуринчен ытла çĕнĕ техникăпа, малта пыракансен опычĕпе, наукăпа техникăн паха çитĕнĕвĕсемпе туллин усă курма тăрăшманнинчен килет. Халиччен, плана сезона пынă рабочисемпе тата лавсемпе тултарнă чухне, вăрман промышленноçĕн работникĕсем ĕç тухăçлăхне ÿстерессишĕн тивĕçлипе кĕрешмен. Халĕ вара «Чăвашвăрман» тресчĕ тата ăна пăхăнса тăракан предприятисен руководителĕсем, çавăн пекех парторганизацисем те, çав кивĕ ĕç меслетĕнчен хăтăлса çитмен. Вăрманпромхозсенче ĕç тухăçлăхĕ пĕчĕккĕ, яланхи кадрти рабочисенчен кашни виçĕ çынтан пĕри ĕç нормине тултармасть. Пĕлтĕр трест автомобильсемпе тата тракторсемпе усă курмалли задание 80 процент ытларах çеç пурнăçланă.

Трестпа вăрманпромхозсенче цикл меслечĕпе усă курасси, касса йăвантарнă йывăçа сыпăламасăр турттарасси, техникăна татти-сыппиcĕр ĕçлеттересси çинчен сахал мар калаçаççĕ, решенисем йышăнаççĕ, анчах производствăра çав-çавах улшăнусем çук. Хуçалăх руководителĕсем, инженерсемпе техниксем паха пуçарусемпе рационализаторла сĕнÿсем çине тимсĕр пăхни рабочисен пултарулăхĕпе хастарлăхне, çĕнĕлле ĕçлес кăмăлне чакарать. Çакăнта каланине çирĕплетме пĕр-икĕ тĕслĕх çеç илĕпĕр. Трест приказĕсем тăрăх, механизациленĕ 28 участокран 23-шне цикл меслечĕпе ĕçлеме куçарнă. Çав участоксенчен иртнĕ çулхи декабрь уйăхĕнчи плана виçĕ участок çеç тултарнă. Малта пыракан предприятисенче йывăрлăхсемпе çитменлĕхсене пĕтерме рационализаторсемпе изобретательсем нумай пулăшаççĕ. Апла пулин те чылай вăрманпромхозсен руководителĕсемпе трест работникĕсем рабочисемпе специалистсен творчествăлла активлăхне ÿстерме, рационализаторсем валли паха майсем туса пама тăрăшмаççĕ. 1955 çулта Кире тата Приволжски вăрманпромхозсенче рационализаторла сĕнÿсем пурĕ те пĕрер çеç панă.

Республикăри вăрман хатĕрлекенсем КПСС XX-мĕш съезчĕ ячĕпе социализмла ăмăртăва хутшăнчĕç, съезд уçăлнă куна производствăра çĕнĕ çитĕнÿсем тунипе кĕтсе илме пулчĕç. Съезд ячĕпе ĕç вахтине тăрса, Вăрнар вăрманпромхозĕн коллективĕ икĕ уйăхри плана февралĕн 14-мĕшĕ тĕлне тултарма обязательство йышăнчĕ. Вăл хăйĕн сăмахне чыслăн пурнăçлать. Январь уйăхĕнче вăрманпромхоз планран ирттерсе 5 пин кубометр йывăç турттарса кăларчĕ. Йĕпреç тата Буински вăрманпромхозсен коллективĕсем те кăçал лайăхрах ĕçлеме пуçларĕç. Кашни вăрманпромхозрах ĕç нормине куллен-кун ирттерсе пыракан механизаторсем пур. Сысуйкин, Вельдяев, Барышев, Капитонов, Янчиков юлташсем тата ытти новаторсем хĕлĕн-çăвĕн тухăçлă ĕçлеççĕ.

Малта пыракан предприятисен тата производство новаторĕсен опычĕ çакна уççăн кăтартса парать: вăрманпромхозсем тăтăшах, кирек мĕнле çанталăкра та плана тултарса пыма пултараççĕ, хуçалăх руководителĕсем, партипе профсоюз организацийĕсем хăйсен коллективĕсене ĕçре тĕл пулакан йывăрлăхсене пĕтерме, йышăннă обязательствăсене пурнăçлама мобилизацилеме пĕлни тата тăрăшни çеç кирлĕ.

Вăрманпромхозсене пĕрмаях çĕнĕ техника килсе тăрать. Касса йăвантарнă йывăçа сыпăламасăр турттарма ТДТ-40, ТДТ-54, С-80 тракторсем, хăватлă автомобильсем пур. Вĕсемпе тĕрĕс усă курмалла. Анчах трест тата вăрманпромхозсем пуян техникăпа япăх усă кураççĕ, çавăнпа плана тултараймаççĕ. Иртнĕ уйăхра трест пушшех япăх ĕçлерĕ, производство планне чылай тултараймарĕ, пĕлтĕрхи январь уйăхĕнчипе танлаштарсан, 40 пин кубометр йывăç сахалтарах турттарса кăларчĕ. СССР Вăрман промышленность министерствине пăхăнса тăракан 71 комбинатпа трест хушшинче «Чăвашвăрман» тресчĕ чи юлса пыраканнисенчен пĕри шутланать. Çакă республикăри партипе совет общественноçне хытă хумхантарать. Трест управляющийĕ Игнатьев юлташ облаçри парторганизацин XXVI-мĕш конференцийĕнче критикленинчен тивĕçлĕ вывод туман, юлса пыракан вăрманпромхозсене çав-çавах çителĕклĕ пулăшмасть.

Куçса çÿрекен электростанцисемпе япăх усă курни çинчен, автомашинăсемпе тракторсем ахаль нумай ларни, складсенче ĕçе йĕркелемени, çулсене вăхăтра тасатса тăманни çинчен редакцие нумай çĕртен çырса пĕлтереççĕ. Çавăн пек çитменлĕхсем уйрăмах Первомайски, Приволжски, Пăрачкав, Кире вăрманпромхозĕсенче ытларах. Халăх хуçалăхĕн интересĕсем çавăн пек çитменлĕхсене пĕтерме хушаççĕ.

Ĕç ăнăçлăхне çынсем, кадрсем татса параççĕ. Кашни вăрманпромхозрах рабочисем валли ĕçлеме, пурăнма, канма паха майсем туса парас пулать. Уйрăмах хĕллехи вăхăтра рабочисемшĕн ытларах тăрăшмалла. Çак пуриншĕн те паллă тивĕçе чылай вăрманпромхозсен руководителĕсем манаççĕ. Делянкăсенче ăшăнмалли будкăсем пулччăр, рабочисем куллен вĕри апат çиме, чей ĕçме, апат-çимĕç, махорка т. ыт таварсем пĕр чăрмавсăр туянма пултарччăр. РСФСР Вăрман промышленность министерствин республикăри УРС-ĕн (начальникĕ Никандров юлташ) столовăйсемпе магазинсен ĕçне йĕркелл мелле, рабочисемпе специалистсен кулленхи ыйтăвĕсене лайăхрах тивĕçтермелле.

Парти райкомĕсемпе райисполкомсен вăрман промышленноçĕ юлса пынине хăвăртрах пĕтерме, производство планне кашни предприяти тăрăх тултарма тивĕçлĕ мерăсем йышăнмалла, вăрманпромхозсене ялан ĕçлеме рабочисем илме пулăшмалла, хĕллехи вăхăтра ĕçлеме колхозсенчен турттăм вăйĕ çителĕклĕ уйăрса ямалла.

Пĕрремĕш кварталта вăрман промышленноçĕ умĕнче пысăк та ответлă задачăсем тăраççĕ. Çулталăкри плана вăхăтра тултарасси çак кварталта ăнăçлă ĕçленинчен нумай килет. Вăрманпромхозсенчи партипе профсоюз организацийĕсен рабочисене, инженерсемпе техниксене, вăрманта ĕçлекен колхозниксене ĕç тухăçлăхне кунтан-кун ÿстерсе пыма, техникăпа туллин усă курма мобилизацилесе пымалла.

К. Е. Ворошилов юлташ 75 çул тултарнă ятпа килнĕ саламлă телеграммăсем

☆ ☆

Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕн Верховнăй Совет Президиумĕн Председательне

Климент Ефремович ВОРОШИЛОВ юлташа

Хисеплĕ К. Е. Ворошилов юлташ!

Эсир çуралнăранпа 75 çул тултарнă май Сире Китай Халăх Республикин правительстви тата Китай халăхĕ ячĕпе хĕрÿллĕн саламласа сывлăх сунма ирĕк парсамăр.

Эпир Сире сывлăхлă пулма, нумай вăхăт пурăнма тата аслă коммунизм строительствин ĕçĕнче, пĕтĕм тĕнчери мире хÿтĕлес ĕçре совет халăхне ертсе пырас тĕлĕшпе татах та чаплăрах çитĕнÿсем тума чун-чĕререн ырă сунатпăр.

Китай Халăх Республикин Председателĕ МАО ЦЗЭ-дун.

Пĕтĕм Китайри Халăх представителĕсен пухăвĕн Яланхи Комитечĕн председателĕ ЛЮ ШАО-ци

Китай Халăх Республикин Государство Совечĕн премьерĕ ЧЖОУ ЭНЬ-лай.

Пекин, 1956 çулхи февралĕн 3-мĕшĕ.

К. Е. ВОРОШИЛОВ юлташа

Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕн Верховнăй Совет Президиумĕн Председательне

Мускав

Эсир çуралнăранпа 75 çул тултарнă май Сире, хаклă Председатель юлташ, Польша Халăх Республикин Государство Совечĕ ячĕпе тата хам ятăмпа хĕрÿллĕн саламласа ырă сывлăх сунатăп.

Польша халăхĕ Сире чĕререн кăмăллать тата тав тăвать, Сире, социализм ĕçĕшĕн пĕр пăркаланмасăр кĕрешекен çынна, Совет государствин тата Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн питĕ паллă руководителĕсенчен пĕрне, Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕпе Польша Халăх Республики хушшинчи тăванлăхпа туслăха çирĕплетмелли политикăна çирĕп тытса пыракан çынна, пысăка хурса хаклать.

Эсир çуралнăранпа 75 çул тултарнă кун Сире чун-чĕререн ырă сывлăх тата вăрăм ĕмĕр сунатăп, çавăн пекех çĕнтерÿллĕн коммунизм тăвакан совет халăхĕн ырлăхне ÿстерме, халăхсем хушшинчи мире çирĕплетме Хăвăрăн творчествăлла ĕçре çĕнĕ çитĕнÿсем тума ырă сунатăп.

Александр ЗАВАДСКИЙ

Польша Халăх Республикин Государство Совечĕн Председателĕ.

Варшава.

СССР Верховнăй Совечĕн Президиумĕн Председателĕ

Климент Ефремович ВОРОШИЛОВ юлташ патне

Демократиллĕ Германи Республики Президенчĕ янă телеграмма

Мускав, Кремль

Хаклă Ворошилов юлташ!

Эсир 75 çул тултарнă кун тĕлне Сире туслăн саламлама тата чун-чĕререн ырă сунма ирĕк парсамăр. Сире Эпĕ çавăн пекех Демократиллĕ Германи Республики ячĕпе чунтан ырă сунатăп, Эсир пирĕн çĕршывра пулнă чухне унти ĕççыннисем Сире çав тери савăнса кĕтсе илчĕç. Сире, Ворошилов юлташ, ĕççыннисем пур çĕрте те уçă чĕрепе йышăнчĕç, вĕсем Эсир аслă тата асран кайми Ленинăн шанчăклă ученикĕпе соратникĕ пулса тăнине лайăх пĕлеççĕ.

Патша Российин условийĕсенче Эсир, Ворошилов юлташ, рабочи-революционерăн мухтавлă, анчах та йывăр çулне класс кĕрешĕвĕн мĕнпур формисем витĕр, тĕрмесемпе ссылкăсем витĕр, пролетариат Коммунистсен партийĕ ертсе пынипе Октябрьти Социализмла Аслă Революцире çĕнтерÿ тăвиччен утса тухрăр. Çамрăк Совет республикине белогвардеецсемпе империалистла интервентсен тапăнăвĕсенчен хÿтĕлемелле пулса тăрсан, Эсир рабочисемпе хресченсен государствин Хĕçпăшаллă Вăйĕсене организациленĕ тата ертсе пынă чи хăюллă çынсенчен пĕри пулса тăтăр.

Сталинпа пĕрле Эсир марксизм-ленинизма унăн мĕнпур тăшманĕсенчен хÿтĕлерĕр, Совет Союзĕнче социализм çĕнтерĕвĕ валли условисем тума пулăшрăр. Политикăлла кĕрешÿре тата вăрçăри çапăçусенче тĕрĕсленсе пиçĕхсе, Эсир Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн—пирĕншĕн пурсăмăршăн та пример тата учитель пулса тăракан партин Центральнăй Комитечĕн членĕ пулса тăтăр.

Государствăн Оборона Комитечĕн членĕ пулса, Эсир Хăвăрăн Советлă Тăван çĕршыва Германи фашизмĕ сĕмсĕррĕн тапăннинчен, фашизмăн вăрçă вăрçмалли тискер меслечĕсенчен хÿтĕлес, Европăри халăхсене фашизм пусмăрĕнчен ирĕке кăларас ĕçе питĕ пысăк вăй хутăр.

Вăрçа тата унăн пĕтĕм йывăрлăхне пĕлнĕрен ĕнтĕ Эсир миршĕн тата халăхсем хушшинчи туслăхшăн тÿрĕ кăмăлпа, пĕтĕм вăя хурса кĕрешекен çын пултăр, халĕ те çавăн пек çын пулса тăратăр. Демократиллĕ Германи Республикинчи рабочисемпе хресченсем, наукăпа искусство деятелĕсем Сире—Совет государствин деятельне, пирĕн халăхсем хушшинчи туслăха çирĕплетессишĕн, мĕнпур халăхсем пĕр-пĕрне ăнлансах пурăнмалла тăвассишĕн яланах çирĕп тăракан çынна, саламласа чыслаççĕ.

Эпĕ Сире, хаклă Ворошилов юлташ, Совет Союзĕнчи халăхсен ырлăхĕшĕн, пĕтĕм тĕнчери миршĕн татах нумай, нумай çулсем ĕçлесе пурăнма ырă сывлăхпа вăй-хал сунатăп. Çапла ырă сунса тата чĕререн саламласа, яланах Сирĕн

В. ПИК.

Берлин, Нидершенхаузен, 1956 çулхи февралĕн 2-мĕшĕ.

Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕн Верховнăй Совет Президиумĕн Председательне

К. Е. ВОРОШИЛОВ юлташа

Эсир çуралнăранпа 75 çул тултарнă кун Сире, Председатель юлташ, Венгри халăхĕн, Венгри Халăх Республики Президиумĕн ячĕпе тата хам ятăмпа чĕререн саламласа ырă сывлăх сунма ирĕк парсамăр. Çак кун Венгри халăхĕ Сире, хаклă Ворошилов юлташ, хăйĕн юратнă тусне ырă сывлăх сунса саламлать. Хăйне Эсир чунтан кăмăлланине тата ырă кăмăлпа пулăшнине вăл хăй курса ĕненчĕ. Совет халăхĕпе Венгри халăхне çыхăнтарса тăракан никам çĕмĕреймен туслăх тата çирĕп союз тăвас тĕлĕшпе Эсир пирĕн халăх ирĕке тухнă хыççăнхи çулсенче тава тивĕçлĕ пысăк ĕçсем тунине Венгри халăхĕ лайăх астăвать. Эпир çакна çирĕппĕн шанса тăратпăр: Венгри халăхĕн ирĕклĕхне, никама пăхăнманлăхне тата унăн ÿсĕмне сыхлама питĕ кирлĕ туслăхпа союз малашнĕ те яланах çирĕпленсе пырĕç. Венгри халăхĕн туйăмĕсене палăртса, Сире чун-чĕререн ырă сывлăх тата вăй-хал сунатăп, халăхсен ырлăхĕшĕн, Совет Союзне малалла вăйлатас, халăхсем хушшинчи туслăха, вĕсем килĕштерсе ĕçлесе пурăнассине аталантарас, çирĕп мир тăвас тĕлĕшпе Эсир нумай çулсем ĕçлесе пурăнмалла пултăр.

Венгри Халăх Республикин Президиумĕн Председателĕ

ИШТВАН ДОБИ.

Будапешт, 1956 çулхи февралĕн 3-мĕшĕ.

Мускава Китай Халăх Республикин делегацийĕ килнĕ

Февралĕн 4-мĕшĕнче Мускава Китай Халăх Республикин делегацийĕ килнĕ. Делегаци пуçлăхĕ—Китай Халăх Республикин Председателĕн Заместителĕ Чжу Дэ маршал, делегаци составĕнче: Китай Халăх Республикин оборона енĕпе ĕçлекен Государство Комитечĕн Председателĕн Заместителĕ Не Жун-чжэн маршал, Пĕтĕм Китайри халăх представителĕсен Пухăвĕн Яланхи Комитечĕн членĕ Лю Лань-тао, делегацин генеральнăй секретарĕ Ши Чжэ.

Совет Союзĕн чиккинчен пуçласа делегацине пĕрле СССР Верховнăй Совет Президиумĕн протокол начальникĕ Г. И. Фомин пулнă.

Белорусски вокзала Китай Халăх Республикипе ССР Союзĕн государство ялавĕсемпе илемлетнĕ. Вокзалта Китай Халăх Республикин делегацине çаксем кĕтсе илнĕ: СССР Министрĕсен Совечĕн Председателĕн Пĕрремĕш Заместителĕ А. И. Микоян, СССР Министрĕсен Совечĕн Председателĕн Пĕрремĕш Заместителĕ тата СССР Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министрĕ В. М. Молотов, СССР Оборона министрĕ, Совет Союзĕн Маршалĕ Г. К. Жуков, СССР Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министрĕн Заместителĕ Н. Т. Федоренко, Ĕççынни депутачĕсен Мускав Совечĕн Исполком Председателĕ Н. И. Бобровников, СССР Ют çĕршыв Ĕçĕсен министерствин Инçет Хĕвелтухăç пайĕн заведующийĕ И. Ф. Курдюков, СССР Министрĕсен Совечĕн Председателĕн протокол начальникĕ Е. А. Тарабрин, Мускав хулин коменданчĕ И. С. Колесников генерал-майор, СССР Ют çĕршыв ĕçĕсен министерствипе СССР оборона министерствин ответлă сотрудникĕсем, Совет Союзĕн тата урăх çĕршывсен журналисчĕсем.

Делегацие Китай Халăх Республикин ССР Союзĕнчи Чрезвычайнăй тата Полномочнăй Посолĕ Лю Сяо, посольство сотрудникĕсем кĕтсе илнĕ. Вокзалта урăх çĕршывсен ССР Союзĕнчи чылай посольствисемпе миссийĕсен пуçлăхĕсем пулнă.

Перрон çине хисеплĕ хурал тăратнă. Оркестр Китай Халăх Республикипе Совет Союзĕн государство гимнĕсене каланă.

Делегаци пуçлăхĕ—Китай Халăх Республикин Председателĕн Заместителĕ Чжу Дэ микрофон умĕнче сăмах тухса каланă. Вăл çапла каланă:

— Хаклă юлташсем, тусăмсем!

Мана пысăк чыслă шăпа тухрĕ, хамăрăн аслă союзник пулса тăракан çĕршывра — Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕнче пулма, кунта килнипе усă курса Сире тата Совет Союзĕнчи халăхсене Китай халăхĕнчен тăванла хĕрÿллĕ салам калама тÿр килчĕ, эпĕ çавăншăн хама питĕ телейлĕ тесе шутлатăп.

Коммунизм тăвакан Аслă Совет Союзĕ мĕнпур çĕршывсенчи ĕççынни массисен çулне, миршĕн тата этемлĕхе телейлĕ пурнăç туса парассишĕн кĕрешекенсен çулне çутă маяк пек çутатса тăрать. Совет Союзĕн халăх хуçалăхĕ çав тери вăйлă аталанни тата унăн çĕнĕ общество тăвас ĕçри мĕнпур çитĕнĕвĕсем пĕтĕм этемлĕхшĕн питĕ пысăк пĕлтерĕшлĕ. Совет Союзĕнчи халăхăн социализм тата коммунизм тăвас ĕçри пуян опычĕпе аслă примерĕ социализм лагерĕнчи тата тĕнчери мĕнпур çĕршывсенчи ĕççынни массисене яланах хавхалантараççĕ.

Совет халăхĕн çитĕнĕвĕсем çакна кăтартса параççĕ: малта пыракан этемлĕхĕн ĕмĕтне—чи ырă, чи телейлĕ, чи лайăх общество тăвассишĕн ĕмĕтленнине пурнăçа кĕртме пулать.

Совет Союзĕн мирлĕ политики пĕтĕм тĕнчере мирпе хăрушсăрлăха тĕреклетме питĕ нумай пулăшрĕ. Çак мирлĕ политикăна социализмла лагерьти 900 миллион çын тата мире юратакан пур халăхсем те ырласа хÿтĕлеççĕ, вĕсем пĕрле тăрăшнипе халех ĕнтĕ чылай пысăк результатсем тунă. Çак политика малашне татах та пысăкрах çитĕнÿсем тăвассине эпĕ ĕненсе шанса тăратăп.

Совет халăхĕ Китай халăхĕпе тăванла туслă пурăннине, çак питĕ пысăк туслăха Китай халăхĕ нихçан та манас çук.

Китай Халăх Республикине туса хунă малтанхи кунсенчен пуçласах совет халăхĕпе унăн правительстви Китай халăхне хуçалăха юсас тата социализмла экономика никĕсне тăвас ĕçре тÿрĕ кăмăлпа, пур енĕпе те пысăк пулăшу парса тăчĕç, çавăншăн Китай халăхĕ совет халăхĕпе унăн правительствине чун-чĕререн кăмăлласа тав тăвать.

Хаклă юлташсем, Сирĕн чаплă столицăна—Мускава килсе çитнĕ май, мана Китай халăхĕ хăйĕн аслă пиччĕшне—совет халăхне хĕрÿллĕ салам яни тата ырă сунни çинчен пĕлтерме ирĕк парсамăр.

Ăнăçлăн коммунизм обществи туса пыракан Совет Союзĕ чечекленсе тата вăйланса пытăр!

Китайпа Совет Союзĕн аслă халăхĕсен тăванла туслăхĕ ĕмĕр-ĕмĕрех пурăнтăр!

Совет Союзĕ ертсе пыракан мирпе демократи тата социализм лагерĕ тачă пĕтĕçсе тăни тата тачă çыхăнса ĕçлени сывă пултăр! (ТАСС).

К. Е. Ворошилов Чжу Дэ маршала йышăнни

Февралĕн 4-мĕшĕнче СССР Верховнăй Совет Президиумĕн Председателĕ К. Е. Ворошилов Китай Халăх Республикин Председателĕн Заместительне Чжу Дэ маршала тата унпа пĕрле килнĕ çынсене: Китай Халăх Республикин оборона енĕпе ĕçлекен Государство Комитечĕн Председателĕн Заместительне Не Жун-чжэн маршала, Пĕтĕм Китайри халăх представителĕсен Пухăвĕн Яланхи Комитечĕн членне Лю Лань-таона тата Ши Чжэ советника йышăннă.

Хăнасемпе пĕрле Китай Халăх Республикин ССР Союзĕнчи Чрезвычайнăй тата Полномочнăй Посолĕ Лю Сяо, СССР Ют çĕршыв ĕçĕсен министерствин ответлă сотрудникĕ Л. Н. Масько пулнă.

Китай Халăх Республикин Председателĕн Заместителĕ Чжу Дэ маршал К. Е. Ворошилова вăл 75 çул тултарнă ятпа саламланă, çирĕп сывлăхлă пулма, нумай пурăнма тата государство ĕçĕсене ăнăçлă туса пыма ырă суннă.

Унтан К. Е. Ворошиловпа Чжу Дэ маршал пĕр-пĕринпе чун-чĕререн, туслăн калаçнă.

Йышăнура СССР Верховнăй Совет Президиумĕн секретарĕ Н. М. Пегов тата СССР Верховнăй Совет Президиумĕн протокол начальникĕ Г. И. Фомин пулнă.

Республикăри колхозсенче çĕрулмипе пахча çимĕç тухăçлăхне ÿстермелли майсене палăртаççĕ

МУРКАШ. («Коммунизм ялавĕ» корр., телефонпа). Районти ялхуçалăх ĕçченĕсем КПСС Центральнăй Комитечĕпе СССР Министрĕсен Совечĕ çĕрулмипе пахча çимĕç туса илессине тата хатĕрлессине ÿстересси çинчен йышăннă постановление пысăк хаваслăхпа сÿтсе яваççĕ. «Герой» колхоз членĕсем иртнĕ çул 4 гектар çине купăста лартнă, кашни гектартан вăтам шутпа 230 центнер пухса кĕртнĕ. Постановленипе паллашнă май, колхозниксем купăста лартмалли лаптăка 5 гектара çитерме, кашни гектартан 300 центнер пухса кĕртме обязательство йышăнчĕç.

— Эпир,—тет артель председателĕ С. Бардасов юлташ,—кăçал купăстана ытларах тăварласа сутма тытăнатпăр. Çакă пире пахча çимĕçрен иртнĕ çулхинчен чылай нумайрах тупăш илме май парĕ. Купăста тăварлама каткасем халех туянма тытăнтăмăр ĕнтĕ.

«Герой» колхоз кăçал çĕрулми лартмалли лаптăка та чылай ÿстерет. Кашни гектартан вăтам шутпа 180 центнер çĕрулми пухса кĕртме палăртнă.

Партипе правительство йышăннă çĕнĕ постановлени çине ответлесе, «Красное Сормово» колхоз членĕсем кăçал 100 гектар çине çĕрулми лартма, кашни гектартан вăтам шутпа 200 центнер пухса кĕртме, государствăна закуп шучĕпе 60 тоннăран кая мар çĕрулми сутма пулчĕç. Халĕ кунта çĕрулми тата пахча çимĕçсем лартмалли лаптăксене тислĕк кăлараççĕ.

Иртнĕ çул Энгельс ячĕпе тăракан колхозри П. Федорова юлташ ертсе пыракан звено пысăк тухăçлă помидор пăхса ÿстернĕ, çавна май артель пахча çимĕçрен малтанхи çулхинчен чылай нумайрах тупăш илнĕ. Вĕсем кăçал помидор лартмалли лаптăка икĕ хут ÿстерме йышăнчĕç.

Çĕнĕ пилĕкçуллăхăн малтанхи çулĕнче районти колхозсем пурĕ 1.475 гектар çине çĕрулми лартма, кашни гектартан вăтам шутпа 176 центнер пухса кĕртме пулнă. Çĕнĕ постановленипе хавхаланса, халĕ колхозсем çĕрулми тата пахча çимĕç лартас енĕпе ĕçлеме уйрăм звеносем йĕркелеççĕ, вĕсене пултаруллă кадрсемпе çирĕплетеççĕ.

* * *

КРАСНОАРМЕЙСКИ. («Коммунизм ялавĕ» корр., телефонпа). КПСС Центральнăй Комитечĕпе СССР Министрĕсен Совечĕ çĕрулмипе пахча çимĕç туса илессине тата хатĕрлессине ÿстересси çинчен йышăннă постановление районти ялхуçалăх ĕçченĕсем пысăк хаваслăхпа кĕтсе илчĕç. «Волга» колхоз членĕсем çак кунсенче çĕрулмипе пахча çимĕç лартмалли лаптăксене хĕрсех тислĕк кăлараççĕ. Çĕрулми лартмалли лаптăка кăçал 80 гектара çити пысăклатма, унăн тухăçлăхне иртнĕ çулхинчен икĕ хута яхăн ÿстерме палăртнă.

«Путь Ленина» артель членĕсем кăçал çĕрулмине иртнĕ çулхинчен 10 гектар ытларах лартаççĕ. Колхозниксем кашни гектартан вăтам шутпа 600 центнер пахча çимĕç, 150 центнер çĕрулми туса илме обязательство йышăнчĕç.

Ленин ячĕпе тăракан колхозра çĕрулми лартмалли лаптăксене иртнĕ кĕркуннех лайăх хатĕрлесе хăварнă. Унта кашни гектар çине 20 тонна тислĕк кăларнă, тарăн сĕртме тунă. Çĕрулми вăрлăхĕ çителĕклĕ хатĕрленĕ. КПСС Центральнăй Комитечĕпе СССР Министрĕсен Совечĕ йышăннă çĕнĕ постановленипе паллашнă хыççăн, колхозниксем кăçал кашни гектартан 200 центнер çĕрулми пухса кĕртме обязательство илчĕç, пахча çимĕç лартмалли лаптăка 4 гектар чухлĕ пысăклатма пулчĕç.

Болгари Халăх Республикин Халăх пухăвĕн делегацийĕ Мускавран тухса кайни

Февралĕн 5-мĕшĕнче Болгари Халăх Республикин Халăх Пухăвĕн бюро Председателĕ Ф. Козовский ертсе пыракан Халăх Пухăвĕн делегацийĕ Мускавран Киева тухса кайнă. Çав делегаци Совет Союзне ССР Союзĕн Верховнăй Совечĕ чĕннипе килнĕ пулнă. Вĕсем Киевран Тăван çĕршыва каяççĕ.

Внуково аэродромне Болгари Халăх Республикин тата Совет Союзĕн Государство ялавĕсемпе илемлетнĕ. Болгарирен килнĕ хăнасене Мускаври ĕççыннисен представителĕсем, СССР Верховнăй Совечĕн Союз Совечĕн Председателĕ А. П. Волков, СССР Верховнăй Совет Президиумĕн секретарĕ Н. М. Пегов, ССР Союзĕн Министрĕсем тата ытти официальнăй çынсем ăсатса янă.

Ăсатса яракансем хушшинче çавăн пекех Болгари Халăх Республикин Совет Союзĕнчи Чрезвычайнăй тата Полномочнăй Посолĕ К. Т. Лукановпа Посольство сотрудникĕсем пулнă.

Самолет çине ларас умĕн делегаци пуçлăхĕ Ф. Козовский микрофон умĕнче сăмах тухса каланă. (ТАСС).

ЧĂВАШ АССР-ĕн ТĂВАТТĂМĔШ СОЗЫВРИ ВЕРХОВНĂЙ СОВЕЧĔН ВИÇÇĔМĔШ СЕССИЙĔ УÇĂЛАССИ ÇИНЧЕН

Чăваш АССР-ĕн тăваттăмĕш созыври Верховнăй Совечĕн виççĕмĕш сессийĕ 1956 çулхи февралĕн 9-мĕшĕнче, кăнтăрла иртсен 2 сехетре, Совечĕсен Çуртĕн ларусен залĕнче уçăлать.

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

Коммунистсен пухăвĕнче

ЕТĔРНЕ. Нумаях пулмасть райисполкомри парторганизацин уçă пухăвĕ пулса иртрĕ. Пухура чи кирлĕ ыйтăва—райсовет исполкомĕн ĕçне лайăхлатасси çинчен сӳтсе яврĕç.

Пуху исполком пайĕсен ĕçĕнчи çитменлĕхсене палăртрĕ, пайсенче ĕçлекен хăшпĕр работниксен ĕçĕсене тишкерсе тухрĕ.

Докладчик — исполком председателĕн заместителĕ Кузьмин юлташ хăйĕн сăмахĕнче исполком работникĕсем колхозсемпе ял Совечĕсенче пулнă чухне организаторла ĕçсем туманни çинчен, вĕсем тĕрлĕрен кăтартусем çеç парса хăварни çинчен каларĕ. Вăл çакăн пек тĕслĕх илсе кăтартрĕ. Социальнăй обеспечени пайĕн аслă инспекторĕ Щетинина юлташ пĕр кун хушшинче Шверник ячĕпе тăракан тата «Правда» колхозсенче пулнă. Вăл пулăшу кассисем япăх ĕçлени çинчен акт çырнă та Етĕрнене таврăннă.

Райсовет исполкомĕн пайĕсенче ĕçпе пыракан çынсене йĕркеллĕ йышăнмаççĕ. Коридорта 4—5 пукан çеç, унта сивĕ, таса мар, шыв ĕçме курка та çук. Хăш кун исполкома пĕр вăхăтрах 12—15 çын пырать. Вĕсем валли ларса-тăма та вырăн çук. Уйрăмах кун пек йĕркесĕрлĕхе райпланра курма пулать. Председатель çук вăхăтра райплан работникĕсем час-часах хăйсен кабинечĕсене питĕреççĕ те хула тăрăх тухса утаççĕ. Ĕçпе пынă çынсен вара кунĕпех кĕтсе ларма тивет.

Парти пухăвĕнче çавăн пекех райплан председателĕн Готлиб юлташăн ĕçĕнчи çитменлĕхсем çинчен, вăл ĕççыннисен ыйтăвĕсем çине тимлĕн пăхманни çинчен каланă.

Районти сутĕç пайĕн инспекторĕ Храброва тата социальнăй обеспечени пайĕн заведующийĕ Степанов юлташсем райисполком работникĕсемшĕн кирлĕ пек тăрăшманни çинчен каларĕç.

Йышăннă решенисене пурнăçланине тĕрĕслесе тăмасăр ертсе пырас ĕçе лайăхлатма çук. Райсовет исполкомĕ финанс ĕçне лайăхлатас, колхозсенчи выльăх-чĕрлĕхе лайăх хĕл каçарас, суракине хатĕрленес тĕлĕшпе паха решенисем йышăннă, анчах чылайăшне пурнăçламан. Ку вăл исполком решенисене пурнăçлас тĕлĕшпе организаторла ĕçсем туса ирттерменнинчен, вĕсене пурнăçланине тĕрĕслесе тăманнинчен килнĕ.

Пухура çавăн пекех культура пайĕн, сывлăха сыхлас ĕç пайĕн, ял тата колхозсенчи строительство енĕпе ĕçлекен пайăн ĕçĕсене критиклерĕç, вĕсем хуçалăхпа культура строительствинчи чи кирлĕ ыйтусемпе сахал интересленеççĕ.

Пухура пулнисем райсовет исполкомĕн ĕçне лайăхлатас тĕлĕшпе чылай сĕнӳсем пачĕç. Уйрăмах райисполкомра халĕ пĕтернĕ районти ялхуçалăх пайĕ вырăнне агроном-инструкторпа зоотехник-инструктор пулмалли çинчен каларĕç. Çавăн пекех райисполком председателĕ çумĕнчи кадрсем енĕпе ĕçлекен секторăн заведующийĕн, суту-илӳ пайĕн заведующийĕн должноçĕсене пĕтересси çинчен, нумай ачаллă амăшсене пулăшу парас енĕпе ĕçлекен пая районти финанс пайĕпе пĕрлештересси çинчен сĕнӳ пачĕç.

Пухура пулнисем хатĕрлев организацийĕсен штачĕсене нĕчĕклетесси çинчен, ял Совечĕсенче хатĕрлев енĕпе ĕçлеме уйрăм çынсене (вĕсем ял Совет председателĕн заместителĕсем пулма пултараççĕ) лартма кирли çинчен, район Совечĕн исполкомĕнче уйрăм инструктор пулмалли çинчен сĕнӳсем тăратрĕç, çавăн пекех ытти чылай кирлĕ сĕнӳсем те пачĕç.

Ф. ПЕТРОВ.

Колхозниксен хастарлăхне ӳстерсе пыратпăр

Пирĕн колхоз пĕлтĕр кашни гектартан вăтам шутпа 15,5 центнер е, урăхла каласан, 1954 çулхинчен икĕ хут нумайрах тĕштырă пухса кĕртрĕ. Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе те хăшпĕр çитĕнӳсем турă. Кашни ĕнерен висĕмçулхинчен 200 килограмм ытларах сĕт суса илнĕ.

Колхозăн укçа-тенкĕ тупăшĕ 1954 çултах миллион тенкĕрен иртрĕ. Çавна пула обществăлла выльăх-чĕрлĕх валли типовăй проектпа çĕнĕ витесем тума лайăх майсем пулчĕç. Халĕ ĕнтĕ выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе малалла вăйлатма лайăх условисем пур: апат çителĕклĕ уйăрнă, выльăхсем валли сутă та ăшă витесем тунă.

Пирĕн колхозниксем çак çитĕнӳсемпе лăпланса лармаççĕ. Пуçламăш парторганизаци пулăшнипе вĕсем хуçалăхри усă курман резервсемпе майсене уçса палăртрĕç. Мĕнпур вăйсемпе майсене шута илнĕ хыççăн, 1956 çулта тата пысăкрах ĕçсем тума йышăнчĕç. Кашни гектартан вăтам шутпа 16 центнер тырă туса илмелле. Çапла вара, артелĕн КПСС Центральнăй Комитечĕн январьти Пленумĕн решенийĕсене пурнăçлас тĕлĕшпе тунă малашлăх планĕнче палăртнă задание 1957 çулта мар, кăçалах пурнăçламалла. Ĕне ферминче ĕçлекенсем кашни ĕнерен 1.380 литр (пĕлтĕрхинчен 380 литр нумайрах) сĕт суса илме сăмах пачĕç. Сĕт суса илесси кăçал, 1954 çулхипе танлаштарсан, 2,5 хут ӳсет. Сысна ашĕ туса илесси те иртнĕ çулхинчен чылай ӳсмелле.

Тырпул тухăçне хăпартас тесе, малашне çĕре органикăлла тата минераллă удобренисемпе ытларах çемçетме палăртнă. Акăнакан çĕрĕн кашни гектарĕ çине колхоз кăçал пурĕ 27 пин тонна ытларах тислĕкпе торф тата юшкăн тăпри кăларать. Иртнĕ çулта кашни гектар çĕр çине 8 шар тонна çеç удобрени тăкса çемçетнĕ пулнă. Вырăнти удобренисем тĕлĕшпе илсен, пирĕн колхозниксем Октябрьски районĕнчи «Звезда» колхоз председателĕн С. Яковлев юлташăн нумаях пулмасть «Коммунизм ялавĕ» хаçатра пичетленнĕ статьяри шухăшсемпе пĕтĕмпех килĕшеççĕ. Тислĕкпе торф тата юшкăн тăпри пирĕн условисенче чăннипех те тырпул тухăçне хăпартмалли паха удобрени пулса тăраççĕ. Сăнаса пăхнă тăрăх, çулсерен тислĕк нумай тăкнă çĕр çинче кашни гектартан 2—3 центнер тырă ытларах хутшăнать.

Кăçал пирĕн колхозниксем акмалли вăрлăхăн пахалăхне малалла лайăхлатаççĕ, пĕрремĕшпе иккĕмĕш кондицие ларнă вăрлăхсем кăна акатпăр.

Тырпул тухăçне ӳстерес ĕçре кукуруза пысăк вырăн йышăнса тăмалла. Çак паха культурăна артель 267 гектар, урăхла каласан, акмалли пĕтĕм çĕрĕн 21 проценчĕ чухлĕ акать. Кашни гектартан 50 центнер кукуруза тĕшши туса илессе çирĕппĕн шанатпăр. Çапла кукуруза пуçĕнчен кашни сысна ами валли 3 тоннăран кая мар, пурĕ 300 тонна паха силос хывмалла. Кунсăр пуçне кукуруза çулçисемпе тунисенчен те силос нумай пулать, ĕнесене симĕслле çулса çитерме те чылай кукуруза уйăратпăр.

Обязательствăсем илнипех çырлахса, ял ĕçченĕсен ăмăртăвĕ хăй тĕллĕн сарăлса пырасса шанса ларни пысăк йăнăш туни пулĕччĕ. Колхозри пуçламăш парторганизаци колхоз хресченĕсен хастарлăхне производствăлла задачăсене ăнăçлăн татса пама мобилизацилет. Пирĕн умра тăракан чи пысăк задачăсенчен пĕри вăл—çитес суракине тĕплĕн хатĕрленсе çитесси. Мĕнпур вăрлăхсене тĕплĕн сортласа тасатнă, вĕсен шăтас пахалăхне тĕрĕсленĕ.

Халĕ уй-хир бригадисем уя органикăлла удобренисем кăларас, минераллă удобренисем кӳрсе килес тĕлĕшпе ĕçлеççĕ. Çуна çулĕ пулнăранпа суртри акмалли лаптăксем çине 5 пин тонна ытла тислĕк, пĕр пин тонна яхăн торф тата 2 пин тонна ытла юшкăн тăпри кăларнă. Удобренисене пĕрле купаласа компост тунă. Çакăн пек компост кукуруза тухăçлăхне чылай ӳстерет. Кукуруза акмалли çĕр лаптăкне уйрăмах лайăх çемçететпĕр, кашни гектар çине 50—60 тонна вырăнти удобренисенчен хатĕрленĕ компост кăларатпăр.

Коммунистсен партийĕн XX-мĕш съезчĕ умĕнхи социализмла ăмăртура И. Петров юлташ ертсе пыракан бригада малта пырать. Бригада членĕсем съезд уçăлнă кун тĕлне хĕллехи вăхăтра уя удобренисем кăларас тĕлĕшпе панă сăмаха пурнăçларĕç. Кунсăр пуçне кĕлпе кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ чылай пухса хучĕç. Бригадăн ырă тĕслĕхĕ ыттисене те ĕçре çĕнĕ çитĕнӳсем тума хавхалантарать.

Пирĕн колхозниксем кăнтăрла ĕçлеççĕ, каçхине вĕренеççĕ. Висĕ çул вĕренмелли агротехника курсĕнчен пĕлтĕр 35 çын вĕренсе тухрĕç, пĕррремĕш разрядлă çĕрĕç мастерĕн ятне илчĕç. Иккĕмĕш разрядлă çĕрĕç мастерĕн ятне илнисем те чылай. Кăçал курса колхозниксем йышлăн çӳреççĕ. Колхоз агрономĕ А. Абрамов юлташ колхозниксене тăрăшса вĕрентет çеç мар, вĕреннине ĕçе кĕртсе пыма пулăшать.

Парторганизаци колхозри выльăх-чĕрлĕх работникĕсен ĕçри хастарлăхне ӳстерсе пырать. Партин уçă пухăвĕнче дояркăсемпе свинаркăсен социализмла ăмăртăвне вăйлатасси çинчен ятарласа сӳтсе яврăмăр. В. Иванова доярка сĕннипе хĕллехи вăхăтра ĕнесенчен 700-шер литр сĕт суса илессишĕн кĕрешӳ пуçартăмăр. Мала тухнă дояркăсене, свинаркăсене тата сурăх пăхакансене пама куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавсем турăмăр тата укçан преми пама йышăнтăмăр.

Колхозниксене пурлăх енчен хавхалантарса пыратпăр. Иртнĕ çулхи çитĕнӳсемшĕн колхоз 250 колхозника хаклă япаласем парса премиленĕ.

Халĕ, кĕтнĕ пекех, выльăх-чĕрлĕх пăхакансен ĕç тухăçлăхĕ чылай ӳсрĕ. Çĕнĕ хуçалăх çулĕн иртнĕ висĕ уйăхĕ хушшинче дояркăсем кашни ĕнерен иртнĕ çулхи çак вăхăтринчен 102 литр ытларах сĕт суса илчĕç.

Свинаркăсем 100 пуç сысна самăртаççĕ, вĕсенчен çуррине съезд уçăлнă кун тĕлне государствăна сутатпăр. Çулталăк хушшинче пурĕ 300 пуç сысна самăртмалла.

Съезд умĕнхи ăмăртăвăн итогĕсене кашни пилĕк кунтах пăхса тухатпăр, кăтарту хăмисемпе стена хаçачĕ тата боевой листоксем урлă анлă сутататпăр. Ăмăртура яланхи пекех коммунистсем малта пыраççĕ, ытти колхозниксене тăрăшса ĕçлеме хавхалантараççĕ.

Пирĕн колхозниксем ССР Союзĕн халăх хуçалăхне 1956—1960 çулсенче аталантармалли улттăмĕш пилĕк çуллăх план тĕлĕшпе КПСС XX-мĕш съезчĕ паракан директивăсене чĕререн ырлаççĕ. Съезда пирĕн колхоз членĕсем Тăван çĕршывăн вăйхăватне ӳстерессишĕн хастарлă кĕрешнипе, Совет правительствипе Коммунистсен партийĕ тавра тата та тачăрах пĕтĕçнипе кĕтсе илеççĕ.

П. ГРИГОРЬЕВ.

Красноармейски районĕнчи «Сталинец» колхозри партбюро секретарĕ.

Совет Правительстви США Правительствине 1956 çулхи февралĕн 4-мĕшĕнче панă нота

Февралĕн 4-мĕшĕнче СССР Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министрĕн пĕрремĕш заместителĕ А. А. Громыко США-н ССР Союзĕнчи Чрезвычайнăй тата Полномочнăй Посолне Чарльз Э. Болен господина йышăннă та ăна Америкăн çар органĕсем Хĕвеланăç Германи территорийĕ çинчен, çавăн пекех Америкăн Совет Союзĕпе чикĕллĕ хăшпĕр государствăсен территорийĕнчи сывлăш-çар базисенчен ССР Союзĕн сывлăш пространствине шарсем вĕçтерсе янă пирки Совет Правительствин нотине панă.

Аяларахра çав нота тексчĕ пичетленет:

«Совет Правительстви Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен Правительствине çапла калама кирлĕ тесе шутлать:

Кăçалхи январь уйăхĕнче Совет Союзĕн сывлăш пространствинче тĕрлĕ аппаратура, приспособленисем тата ытти грузсем çакса янă сывлăш шарĕсене нумай тытнă. Шарсен диаметрĕ 15 метра çитет. Маларах асăннă шарсем вĕсем—полиэтилен тултарнă, калапăшĕпе 1.600 кубометра çитекен баллонсем. Çавăн пек пĕр шар çумне çакса янă грузсен йывăрăшĕ 650 килограма çитет.

Совет Правительстви аллинчи даннăйсем кăтартнă тăрăх, çак шарсене Америкăн çар органĕсем Хĕвеланăç Германи территорийĕ çинчен, çавăн пекех Америкăн Совет Союзĕпе чикĕллĕ хăшпĕр государствăсен территорийĕсенче вырнаçнă сывлăш-çар базисенчен вĕçтерсе яраççĕ.

Сывлăш шарĕсем çумне çакса янă аппаратура шутĕнче вырăна аэрофотоӳкерчĕксем туса илмелли автоматла ĕçлекен фотокамерăсем, радиопередатчиксем, радиоприемниксем тата ытти те пур. Тытнă шарсене тĕпчесе пăхни çакна кăтартса парать: шарсене те, вĕсем çумне çакса янă аппаратурăна та Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсенче туса хатĕрленĕ. Çакна ăна, сăмахран, аппаратурăн тĕрлĕ пайĕсем çине çырса хунă сăмахсем те, çав пайсене туса кăларакан Америка фирмисен ячĕсем те кăтартса параççĕ.

Маларах асăннă шарсемсĕр пуçне Америка организацийĕсем Совет Союзĕн сывлăш пространствине ССР Союзне хирĕçле тăшманла листовкăсем тата пропаганда литератури хунă шарсем те вĕçтерсе яраççĕ.

Паллă ĕнтĕ, Америка организацийĕсене Хĕвеланăç Германи территорийĕ çинчен грузсем çакнă сывлăш шарĕсем яма чарас тĕлĕшпе кирлĕ мерăсем йышăнас ыйту пирки Совет Правительстви США правительствине 1955 çулхи сентябрĕн 28-мĕшĕнчех каланăччĕ. Совет Правительстви çапла кăтартса панăччĕ: çавăн пек шарсем вĕçсе çӳрени Совет Союзĕн шалти линийĕсем тăрăх, çавăн пекех тĕнчери çĕршывсем хушшинчи линисем, СССР территорийĕпе Европăри чылай государствăсен территорийĕсем урлă каçса каякан линисем тăрăх вĕçекен самолетсемшĕн хăрушлăх туса хурать, тенĕччĕ.

Совет Правительстви çакна палăртать: Америка организацийĕсен маларах асăннă киревсĕр ĕçĕсене чарса лартас тĕлĕшпе США правительстви ку таранччен те мерăсем йышăнмарĕ. Совет Союзĕн ку ĕçе пĕлекен органĕсен даннăйĕсем кăтартса панă тăрăх, Совет Союзĕн территорийĕ тĕлĕнче çавăн пек сывлăш шарĕсем вĕçсе çӳресси чарăнмарĕ кăна мар, юлашки вăхăтра татах та вăйланчĕ.

Малараx асăннă грузсем çакса янă сывлăш шарĕсем хăйсен сывлăш пространствине вĕçе-вĕçе пыракан государствăсем те çавăн пек çул çине тăрас, малараx кăтартса панă законсăр ĕçсемшĕн ответлă пулса тăракан государствăсен сывлăш пространстви еннелле çавнашкал вĕçекен хатĕрсем яма пуçлас пулсан, мĕнле лару-тăру пулса тăрассине ăнланса илме йывăр мар ĕнтĕ.

Америкăн çар органĕсем ССР Союзĕн сывлăш пространствине малараx асăннă грузсем çакнă шарсем вĕçтерсе яни вăл Совет Союзĕн сывлăш пространствине сĕмсĕррĕн киле-киле кĕни пулса, тĕнчери халăхсен правин пурте йышăннă принципне пăсни пулса тăрать, çак принцип тăрăх кашни государствăн хăйĕн территорийĕ тĕлĕнчи сывлăш пространстви тĕлĕшпе тулли суверенитет пур.

Государствăсен сывлăш пространстви тĕлĕшĕнчи суверенитечĕн çак принципĕпе килĕшӳллĕн, пĕр-пĕр государствăн сывлăш пространствинче мĕнле те пулин вĕçев аппарачĕсем çав государство ирĕк панипе кăна вĕçсе çӳреме пултараççĕ.

Малараx каланине шута илсен, Америкăн çар органĕсен çавнашкал ĕçĕсем вĕсем ССР Союзĕн территорине никам пырса тĕкĕнмелле мар йĕркене пăсни пулса тăраççĕ, США Правительстви ООН уставĕ тăрăх илнĕ обязательствăсене хирĕç пыраççĕ, государствăсем хушшинчи йĕркеллĕ хутшăнусемпе килĕшсе тăмаççĕ.

Совет правительстви татăклă протест тăвать, Америкăн çар органĕсен малараx кăтартса панă киревсĕр ĕçĕсене пĕр тăхтаса тăмасăрах чарса лартас тĕлĕшпе США Правительстви мерăсем йышăнтăр тесе требовани лартать».

Чарльз Э. Болен господин çапла каланă: Совет правительствин нотине пĕр тăхтаса тăмасăрах хамăр Правительствăна ярса парăп, тенĕ.

Совет Правительстви Турци Правительствине 1956 çулхи февралĕн 4-мĕшĕнче панă нота

Февралĕн 4-мĕшĕнче СССР Ют Çĕршыв Ĕçĕсен Министрĕн Пĕрремĕш Заместителĕ А. А. Громыко Турцин ССР Союзĕнчи Чрезвычайнăй тата Полномочнăй Посолне К. Н. Кавур господина йышăннă та ăна Совет Союзĕн сывлăш пространствине сывлăш шарĕсем вĕçтерсе ярас ĕçре Турци территорийĕпе усă курнă пирки Совет Правительствин нотине панă.

Аяларахра çав нота тексчĕ пичетленет:

«Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕн Правительстви Турци Правительствине çапла калама кирлĕ тесе шутлать.

Совет Союзĕн çак ĕçе лайăх пĕлекен органĕсем пĕлтернĕ тăрăх, юлашки вăхăтра Нахичеваньпе Ереван хулисем хушшинчи районта Совет Союзĕпе Турци чикки урлă Совет Союзĕн территорийĕпе сывлăш пространствине Турци енчен пысăк сывлăш шарĕсем вуншарăн вĕçсе кĕнĕ. 15 метр диаметрлă çав шарсем çумне 300 килограмм таякан аппаратура çакса янă. Çав шутра вырăна фотоӳкерчĕксем туса илекен аппаратура, çавăн пекех автоматла ĕçлекен радиопередатчиксемпе радиоприемниксем тата ытти грузсем пулнă. СССР территорийĕнче тытнă тата тупнă шарсене тĕпчесе пăхни çакна кăтартса панă: çак шарсене те, вĕсем çумне çакса янă аппаратурăна та США-ра туса хатĕрленĕ. Çакна ăна, сăмахран, аппаратурăн тĕрлĕ пайĕсем çине çырса хунă сăмахсем тата çав пайсене туса кăларакан Америка фирмисен ячĕсем кăтартса параççĕ.

Совет Союзĕн çак ĕçе лайăх пĕлекен авиаци специалисчĕсем каланă тăрăх, çавнашкал шарсем сывлăшри транспортшăн пысăк хăрушлăх пулса тăраççĕ. Тĕрлĕ вăхăтра, çĕр çийĕнчен тĕрлĕ çӳлĕшĕнче тата тĕрлĕ еннелле вĕçсе çӳресе, çак шарсем Совет Союзĕн шалти линийĕсем тăрăх, çавăн пекех тĕнчери çĕршывсем хушшинчи линисем тăрăх вĕçсе çӳрекен самолетсен пассажирĕсемпе экипажĕсен членĕсен пурнăçĕшĕн хăрушлăх туса хураççĕ. Совет Союзĕн çак ĕçе пĕлекен органĕсен сведенийĕсем кăтартнă тăрăх, малараx асăннă шарсене Турци территорийĕ çинчен вĕçтерсе яраççĕ.

Малараx асăннă грузсем çакнă сывлăш шарĕсем хăйсен сывлăш пространствине вĕçе-вĕçе пыракан государствăсем те çавнашкал çул çине тăрас пулсан, малараx асăннă законсăр ĕçсемшĕн ответлă пулса тăракан çĕршывсен сывлăш пространстви еннелле вĕçекен хатĕрсем яма пуçлас пулсан, мĕнле лару-тăру пулса тăрассине ăнланса илме йывăр мар ĕнтĕ.

Малараx асăннă сывлăш шарĕсене Совет Союзĕн сывлăш пространстви еннелле вĕçтере-вĕçтере яни ССР Союзĕн территорийĕн никам пырса тĕкĕнмелле мар тата суверенитетне сиен кӳрет, тĕнчери халăхсен правин ООН уставĕнче çирĕплетнĕ, пурте йышăннă принципĕсене сĕмсĕррĕн пăсни пулса тăрать. Çак ĕçре Турци территорийĕпе усă курни çав законсăр ĕçсемшĕн Турци правительстви çине ответлăх хумасăр тăма пултараймасть.

Совет Союзĕн Правительстви Совет Союзĕн сывлăш пространстви еннелле сывлăш шарĕсем вĕçтерсе ярас ĕçре Турци территорийĕпе усă курнине чарса лартас тĕлĕшпе Турци правительстви тивĕçлĕ мерăсем йышăнасса кĕтет».

К. Н. Кавур господин çапла каланă: Совет Правительствин ноти çинчен хамăр Правительствăна пĕр тăхтаса тăмасăрах пĕлтерĕп, тенĕ.

Вăрман промышленноçĕнчи резервсемпе туллин усă курар

КПСС XX-мĕш съезчĕ паракан Директивăсен проектĕнче вăрман промышленноçне малалла аталантарма, сезонпа ĕçлекен вăрманпромхозсенчен çулталăк тăршшĕпех ĕçлекен предприятисем тума, вăрман промышленноçĕнче оборудованипе лайăхрах усă курма тата ăна пысăк тухăçлă машинăсемпе механизмсем пама палăртнă. Республикăри вăрман промышленноçĕнче ĕçлекенсем Директивăсен проектне тулли кăмăлпа кĕтсе илчĕç, Коммунистсен партийĕ лартакан пысăк задачăсене чыслăн пурнăçлама хатĕр пулнине тепĕр хут кăтартса пачĕç.

Вăрçă хыççăнхи çулсенче КПСС Центральнăй Комитечĕпе Совет правительстви вăрман промышленноçне çĕнĕ техникăпа хĕçпăшаллантарас, йывăç хатĕрлекенсем валли ĕçлеме, пурăнма, канма паха майсем туса парас тĕлĕшпе пысăк ĕçсем туса ирттерчĕç. Ăна республикăри тĕслĕхсенчен те лайăх курма пулать. Халĕ вăрманта тĕрлĕ маркăллă тракторсем, ЗИС-150, ЗИС-151 тата ытти йышши хăватлă автомашинăсем, крансем, лебедкăсем, пăравуссем пур. Малашне сĕнĕрен те çĕнĕ тата хăватлăрах ТДТ-40, ТДТ-54 тракторсем, МАЗ-501 автомашинăсем пуласçĕ. МАЗ-501 автомашина пĕр харăс 20 кубометр ытла йывăç турттарса тухать, талăкра вара 80—100 кубометр таран турттарать. Çĕршывра пĕренесене тиемелли Э-505 крансем, бензинпа ĕçлекен çĕнĕ йышши «Дружба» пăчкăсем туса кăларма тытăннă.

Директивăсен проекчĕ техникăпа туллин усă курассине, ĕç тухăçлăхне ӳстерессине уйрăмах тимлĕн пăхма хушать. Çĕршывра хăватлă промышленность пур, халăх хуçалăхĕн мĕнпур отраслĕсем те çултан-çул çĕнĕ техникăпа пуянланаççĕ, кунашкал техникăна ăнăçлă алла илнĕ квалификациллĕ рабочисемпе специалистсем нумай. Çапла вара пирĕн ĕç тухăçлăхне хăвăрт ӳстерме пысăк майсем пур. 1956—1960 çулсенче промышленноçра ĕç тухăçлăхĕ 50 процентран кая мар ӳсмелле. Уйрăмах вăрман промышленноçĕнче ĕç тухăçлăхне ӳстермелли резервсем нумай. Çав резервсемпе, çĕнĕ техникăпа, малта пыракансен опычĕпе туллин усă курасси—йывăç хатĕрлекенсен чи пысăк задачи.

Пиллĕкмĕш пилĕкçуллăхра «Чăвашвăрман» трестне пăхăнса тăракан вăрманпромхозсем йывăç касса хатĕрлес, турттарса кăларас тата тиесе пушатас ĕçе механизацилес тĕлĕшпе чылай ĕçсем туса ирттерчĕç. 1950 çулхипе танлаштарсан, касса йăвантарнă йывăççене çул хĕррине механизмсемпе илсе тухасси 46 процент, турттарса кăларасси—50,4 процент ӳснĕ. Технологи процесне çĕнетсе лайăхлатас тĕлĕшпе цикл меслечĕпе усă курма, касса йăвантарнă йывăççене сыпăламасăр турттарса кăларма тытăннă. 1955 çулта механизациленĕ участоксенчен 80 проценчĕ цикл меслечĕпе ĕçленĕ. Чылай вăрманпромхозсем йывăççене сыпăламасăр турттарса кăлараççĕ.

Иртнĕ пилĕкçуллăхра вăрманпромхозсенче рабочисемпе специалистсем валли пурăнмалли çуртсем, культурăпа йăла учрежденийĕсем чылай туса лартнă. Государство пулăшнипе çĕршер рабочи хăйсем валли пурăнмалли çуртсем лартнă. Пуçаруллă та пултаруллă механизаторсем ӳсе çитĕнчĕç. М. Сысуйкин, А. Капитонов, В. Хромин юлташсен тата ытти новаторсен паха опычĕпе меслетне республикăра аван пĕлеççĕ.

1955 çулта трест, 1950 çулхипе танлаштарсан, механизмсемпе 382 пин кубометр нумайрах йывăç турттарса кăларнă, 651 пин кубометр нумайрах çул хĕррине илсе тухнă, 854 пин кубометр нумайрах касса хатĕрленĕ. Анчах тӳрех калас пулать, трестпа вăрманпромхозсен руководителĕсем йывăç хатĕрлес ĕçе комплекслă механизацилеме, техникăпа туллин усă курма кирлĕ пек тăрăшмаççĕ. Çавăнпа трест 1955 çулта йывăç турттарса кăлармалли плана тултараймарĕ, Тăван çĕршыв умĕнче пысăк парăма кĕчĕ. Иртнĕ çулхи плана пĕр вăрманпромхоз та тултараймарĕ. Уйрăмах Первомайски тата Кире вăрманпромхозĕсем япăх ĕçлеççĕ: пĕрремĕшĕ плана 67,8 процент, иккĕмĕшĕ—77 процент кăна тултарнă. Çак икĕ вăрманпромхоз çеç халăх хуçалăхне вуншар пин кубометр йывăç парса çитерейменĕç.

Вăрман промышленноçĕ юлса пыни мĕнрен килет-ха? Хăшпĕр работниксем çак çитменлĕх пуринчен ытларах колхозсем кĕркуннепе хĕллехи вăхăтра йывăç турттарма лавсем сахал уйăрса панинчен килет, теççĕ. Çапла шухăшлани тĕрĕс мар. 1955 çулхи план тăрăх, трест турттарса кăлармалли мĕнпур йывăçран 4,5 процентне, çул хĕррине илсе тухмалли йывăçран 5,5 процентне çеç колхозсен лавĕсемпе турттармалла пулнă. Ыттине вара вăрманпромхозсен хăйсен вăйĕсемпе турттарса кăлармалла пулнă. Чăннипе трест йывăç турттарса кăлармалли плана 87 процент кăна тултарчĕ. Механизмсемпе планпа палăртниччен 461 пин кубометр йывăç сахалтарах турттарса кăларнă тата çул хĕррине 182 пин кубометр йывăç сахалтарах илсе тухнă. Урăхла каласан, механизмсене ĕçлеттермелли çулталăкри нормăсене пурнăçланă пулсан, трест йывăç турттарса кăлармалли плана тултарнă çеç мар, ирттерсе те тултарнă пулĕччĕ.

Первомайски, Приволжски тата Пăрачкав вăрманпромхозĕсем механизмсемпе йывăç турттарса кăлармалли плана 45—55 процент çеç тултарнă. Асăннă вăрманпромхозсен директорĕсемпе главнăй инженерĕсем КПСС Центральнăй Комитечĕн июльти Пленумĕ кăтартса панисенчен тивĕçлĕ вывод туман, техникăпа лайăх усă курма, мастерсен, техноруксен тата ытти работниксен ответлăхне ӳстерме тăрăшмаççĕ. Вĕсем малта пыракан вăрманпромхозсен, вăрман пункчĕсен тата новаторсен паха опычĕпе меслетне вĕренмеççĕ, механизаторсен квалификацине ӳстермеççĕ.

Производствăна тĕрĕс организациleme, социализмла ăмăртăва сарма тăрăшманнипе, машинăсемпе механизмсем час-часах ахаль ларнипе, технологи дисциплинине пăснипе чылай механизаторсем ĕç нормине уйăхран уйăха тултармаççĕ. Хăшпĕр вăрманпромхозсенче технологи процесĕн докуменчĕсене вăхăтра туса хатĕрлемеççĕ, теприсенче—çак ĕç çине е çиелтен пăхаççĕ, е техника енчен тĕрĕс тумаççĕ. Çавăн пирки мастерсем производствăна хăйсем пĕлнĕ пек йĕркелеççĕ, хăшпĕр чухне йăнăшсем тăваççĕ, хăрушсăрлăх правилисене пăсаççĕ.

Уйрăм инженерсем, технорукесем, мастерсем малта пыракансен меслечĕсемпе пуçарăвĕсем пирки сахал мар калаççĕ, анчах вĕсене ĕçе кĕртме тăрăшмаççĕ, новаторсене пулăшмаççĕ. Кире, Буински, Алтышево вăрманпромхозĕсенчи чылай участоксенче цикл меслечĕпе ĕçлемелле тунă. Анчах вăрманпромхозсен главнăй инженерĕсем çав участоксен ĕçĕпе сахал интересленеççĕ, çитменлĕхсемпе кăлтăксене пĕтерме, йăнăшсене çийĕнчех тӳрлетме пулăшмаççĕ. Çавăнпа цикл меслечĕпе ĕçлеме куçарнă кашни тăватă участокран пĕри çеç плана тултарса пырать. Çав вăхăтрах Сĕнтĕрле вăрманпромхозĕнче цикл меслечĕпе ĕçлекен участоксем пурте задание ăнăçлă пурнăçлаççĕ.

Чылай çĕрте çĕнĕ пуçарусене сарма сахал тăрăшаççĕ. Первомайски вăрманпромхозра касса йăвантарнă йывăççене вăрăмĕшĕпех турттарса тухма пулать, мĕншĕн тесен вĕсене анатри складра сыпăлама май пур. Çак вăрманпромхоз руководителĕсем хăйсен ĕçне ытла та вăраххăн урăхлатса сĕнетеççĕ. Кунта юлашки вăхăтченех, цикл меслечĕпе усă курас вырăнне, функциональнăй бригадăсем пулнă.

Производство планне тултарманни, ĕç тухăçлăхĕ пĕчĕкки вăрманпромхозăн финанс хуçалăхне хавшатнă, халĕ Госбанк уйрăмĕ ăна юлса пыракан предприятисемшĕн ятарласа тунă режим тăрăх çеç кивçен укçа парать.

Республикăри вăрман промышленноçĕ юлса пынине хăвăртрах пĕтерес пулать. Облаçри парторганизаци XXVI-мĕш конференцийĕ ку тĕлĕшпе конкретлă решенисем йышăнчĕ. Çак решение пурнăçласси вăрманпромхозсем пурте пĕр тикĕс ĕçленинчен, плана кунтан-кун тултарса пынинчен, малта пыракан опыта анлăн сарнинчен килет.

Пĕтĕм совет халăхĕ пекех, вăрман хатĕрлекенсем те Коммунистсен партийĕн XX-мĕш съездне çĕнĕ çитĕнӳсемпе кĕтсе илессишĕн кĕрешеççĕ. Вăрнар вăрманпромхозĕн коллективĕ съезд уçăлнă кун тĕлне икĕ уйăхри плана тултарма социализмла обязательство йышăнчĕ. Вăл хăйĕн сăмахне чыслăн пурнăçлать. Вăрманпромхоз январь уйăхĕнче йывăç турттарса кăлармалли плана чылай ирттерсе тултарчĕ, ун хыççăн та тухăçлă ĕçлет. Йĕпреç вăрманпромхозĕ те паха тĕслĕхсем кăтартать. Вăл январь уйăхĕнче йывăç турттарса кăлармалли плана 130,5 процент тултарнă. Алтышево вăрманпромхозĕ те вăтам ĕçлет.

Çав вăхăтрах треста каялла турткан предприятисем те сахал мар-ха. Кăçал Сĕмĕрле тата Улатăр вăрманпромхозĕсем ĕç хăвăртлăхне чакарчĕç. Пуринчен ытла Первомайски тата Приволжски вăрманпромхозсем япăх ĕçлеççĕ. Вĕсем йывăç турттарса кăлармалли уйăхри плана 41 процент çеç тултарнă.

Улттăмĕш пилĕкçуллăхра çĕршыври халăх хуçалăхне 990 миллиард тенкĕ укçа хывма, 205 миллион тăваткал метра яхăн пурăнмалли çуртсем лартма, сĕтел-пукан туса кăларассине икĕ хут ӳстерме палăртнă. Çавăн пек пысăк программăна пурнăçлама çĕршыва йывăç материалсем нумай кирлĕ. Çакна вăрман промышленноçĕнче ĕçлекен кашни çын лайăх ăнланăр, государство çирĕплетсе паракан плансемпе заданисене вăхăтра пурнăçлассишĕн вăрманпромхозсенче ăмăрту анлăн сарăлтăр.

Механизациленĕ участоксене пурне те цикл меслечĕ çине куçарни, комплексла бригадăсем туни, йывăç турттаракан механизмсемпе туллин усă курни, йывăççене сыпăламасăр турттарни, производствăри дисциплинăна çирĕплетни, командирсен ответлăхне хăпартни—çаксем вĕсем пурте вăрманпромхозсем юлса пынине пĕтерме пулăшаççĕ.

Кашни вăрманпромхозра механизмсене тĕрĕс ĕçлеттермелле, вăхăтра юсамалла. Кăçал çанталăк сивĕ. Хăшпĕр вăрманпромхозсем гаражсене, мастерскойсене хĕлле ĕçлеме лайăх хатĕрлесе çитереймен, çавăнпа механизмсене юсама кансĕр. Çак çитменлĕхе пĕтермелле, гаражсемпе мастерскойсенче пуринче те хӳтĕ те ăшă пултăр.

Сивĕ çанталăкра вăрманта ĕçлеме çăмăл мар. Хăшпĕр хуçалăх руководителĕсем рабочисем валли делянкăсенче шыв вĕретесси, ăшăнма будкăсем тăвасси, вĕри апат илсе пырасси, рабочисене вăрмана машинăсемпе ăсатса ярасси тата каялла илсе килесси çине чунсăр пăхнине чăтса тăма май çук.

Облаçри парторганизацин XXVI-мĕш конференцийĕ вăрман промышленноçĕ юлса пынăшăн хăшпĕр райисполкомсемпе парти райкомĕсем те ответлине палăртрĕ. Правительство йышăннă тăрăх, районсен хĕллехи вăхăтра ĕçлеме вăрманпромхозсене ĕç вăйĕпе туртăм вăйĕ уйăрса ямалла. Çакна чылай çĕрте, уйрăмах Элĕк, Калинино, Чкаловски, Советски районĕсенче япăх пурнăçлаççĕ.

Республикăри вăрман промышленноçĕн юлса пынине пĕтерме, 1956 çулхи плана ăнăçлă тултарма мĕн кирли пурте çителĕклĕ. Паха майсемпе, хăватлă техникăпа тĕрĕс усă курни çеç кирлĕ.

А. МОИСЕЕНКО.

«Чăвашвăрман» трестăн производство пайĕн начальникĕ.

КПСС XX-мĕш съезчĕ умĕн

ĔÇ ВАХТИНЧЕ

Борис Никоноров паян заводра ытти кунхисенчен иртерех пычĕ. Малтанах вăл хăйĕн бригади ĕçлекен участока пăхса тухрĕ, кирлĕ инструментсем хатĕрлерĕ. Уйччен те пулнарĕ, ăна цех начальникĕ чĕнсе илчĕ. Вăл бригадира смена хушшинче пурнăçламалли задани пачĕ.

Çав вăхăтра бригада членĕсем ĕçе пычĕç. Бригадир вĕсене заданипе тĕплĕн паллаштарчĕ.

— Паянхи задание те ăнăçлă пурнăçлăпăр,— терĕç рабочисем.

Б. Никоноров юлташ ертсе пыракан бригада автомашина кузовĕсене сӳтсе

пухмалла, вĕсене мастерскойра çирĕплетме хатĕрлемелле. Çак ĕçе тума йывăрах та мар пек. Анчах задание ăнăçлă пурнăçлас тесен, питĕ ăста пулмалла. Кашни рабочин хăйне шанса панă ĕçе тĕплĕн, пĕлсе тума вĕренсе çитни кирлĕ. Акă, пĕр-икĕ çул каялла машина кузовне кам мĕнле пĕлет, çапла сӳтсе хунă. Çавăн пирки вăхăт нумай усăсăр сая кайнă. Çапла вара чылай рабочисем нормăна та тултарайман, ĕç пахалăхĕ те лайăх пулайман. Çакă бригадира канăç паман. Вăл ĕçе хăвăртлатма çĕнĕ майсем шыранă, ĕç тухăçлăхне ӳстернипе пĕрлех продукци пахалăхне лайăхлатма тăрăшнă. Пĕррехинче смена вĕçленнĕ хыççăн бригадир рабочисене пĕр çĕре пухса каласнă, мастерскойсем тума машинăсен кузовне хăвăртрах сӳтсе пухассĭ çинчен сăмах пуçарнă.

— Кашни рабочие уйрăм задани памалла.

— Инструментсем çителĕклĕ пулччăр,— сĕннĕ рабочисем.

Тата ытти сĕнӳсемпе канашсем те пулнă. Бригадир вĕсене пурне те шута илнĕ. Тепĕр кунне вара бригада çĕнĕлле ĕçлеме пуçланă. Çапла туни ĕçе кал-кал йĕркелеме май панă.

Унтанпа вăхăт чылай иртрĕ ĕнтĕ. Рабочисен ăсталăхĕ те нумай ӳсрĕ. Халĕ, съезд умĕнхи ĕç вахтине тăрса, бригада членĕсем ĕç тухăçлăхне тăтăшах ӳстерме тăрăшаççĕ. Производствăра чăрмавсем çукпа пĕрех. Акă, иккĕмĕш цех çуртне автомашина кузовне илсе кĕртсе вырнаçтарса лартрĕç. Рабочисем пĕр тăхтаса тăмасăрах хăйсен ĕç вырăнне йышăнчĕç. Пĕрисем—гайкăсем кăлараççĕ, теприсем—кузов урайĕн хăмисене тикĕслесе тухаççĕ. Кашни рабочи хăй вырăнĕнче. Производствăра пĕр-пĕрне кансĕрлени çук. Кашни сменăра рабочисем темиçе автомашинăна мастерской вырнаçтарма хатĕрлесе параççĕ, вĕсене çийĕнчех облицовщиксем ĕçлекен участока ăсатаççĕ. Бригада сменăри нормăна 160 процентран кая мар тултарать.

Пĕр ерне каярах машина кузовĕн хăмисене ахаль пăчкăпа татса тикĕсленĕ. Ку операцие тума сахалтан та 15 минут иртнĕ. Çакă вăл Никоноров юлташ ертсе пыракан бригада членĕсене çырлахтарма пултарайман. Вĕсем хăмасене тикĕслессине хăвăртлатма майĕ лартнă. Нумаях пулмасть çак задачăна татса панă. Цех начальникĕ Тренев юлташ хăмасене тикĕслессине механизациleme сĕннĕ. Вăл заводри конструкторпа пĕрле электропăчкă тума хатĕрленĕ. Эпир заводра пулнă чухне пăчкăна ĕçлеттерсе, сăнаса пăхрĕç. Малтанхи опыт ăнăçлах пулаймарĕ-ха, анчах электропăчкăпа усă курни производствăна лайăхлатма пулăшни уççăнах курăнчĕ. Çĕнĕ инструментпа усă курсан, çав операцире ĕç тухăçлăхне виç-тăватă хут ӳстерме пулать. Цехри рабочисем заводри инженерсемпе техниксемпе пĕрле ĕçлесе, электропăчкăна яланлăхах производствăна кĕртĕç. Çапла вара Никоноров юлташ бригади мастерскойсем вырнаçтарма кузовсем ытларах хатĕрлесе пама тытăнĕ.

Иккĕмĕш цехра А. Щербаков юлташпа тĕл пулма тӳр килчĕ. Вăл облицовщик пулса ĕçлет, мастерской каркасне шуçтимĕрпе витет. Заводра ун пек профессиллĕ рабочисем нумай, анчах Щербаков юлташа кăна мастерскойăн малти тата хыçал енне шуçтимĕрпе витме хушнă. Мĕншĕн тесен ку вăл питĕ кăткăс ĕç шутланать. Тимĕре пăртак тĕрĕс мар кассанах, мастерской çийĕ тикĕс мар витĕнет. Ăста рабочи çакна лайăх ăнланса илнĕ. Вăл мастерской валли шуçтимĕре пĕр виççĕпе, тĕрĕс касса кăларма тăрăшать, ăна хăех çыпăçтарса лартать.

— Заводра туса кăларнă мĕнпур мастерскойсене эпĕ витнĕ, — каласа парать вăл.— Малтанлăха çав ĕçе тума хĕнтерехчĕ. Халĕ производствăна лайăх хăнăхса çитрĕм. Мана вăтă рабочи-жестянщик Александр Николаевич Сидоров юлташ пĕрмай пулăшать. Вăл заводра 29 çул ĕçлет ĕнтĕ. Сидоров юлташ пулăшнипе облицовщик специальноçне вĕрентĕм.

Производство новаторĕсен йышĕ тăтăшах ӳссе пырать. Вĕсем съезд умĕнхи социализмла ăмăртăва хутшăннă, пысăк обязательствăсем илнĕ. Малярсен уйрăмĕнче Парасковья Щеглова юлташ ертсе пыракан звено ĕçлет. Ку звенора пурте çамрăк хĕрсем. Вĕсем предприятире нумай çул ĕçлесе пысăк опыт пухнă. КПСС членĕ Щеглова юлташ пуçарнипе мастерскойсене çĕнĕлле майпа сăрлама тытăннă. Кашни работницăна уйрăм задани панă. Çапла ĕçленипе кашни çын сменăри нормăна мĕн чухлĕ тултарса пынине тĕрĕс шута илме, продукци пахалăхне тăтăшах тĕрĕслесе тăма пулать. Звенора сменăри нормăна тултарса пыраймая работницăсем çук. Малярсен уйрăмĕн задани тăрăх куллен 10 мастерской сăрламалла пулсан, вĕсем 13—14-шар мастерской сăрласа кăлараççĕ. Ĕç пахалăхĕ те лайăх.

Заводра тимĕрçĕ С. Гришин, токарь В. Миронов юлташсене те ырă кăмăлпа асăнаççĕ. Вĕсен ячĕсене хисеп кĕнеки çине кĕртнĕ. Иккĕшĕ те 25 çул ытла производствăра ĕçлеççĕ, нормăна яланах иртерсе тултараççĕ. Слесарь К. Чупраков юлташ та лайăх тĕслĕх кăтартать, сменăри задание 200 процент таран тултарса пырать.

Рабочисем ĕç тухăçлăхне ӳстерме, производство технологине лайăхлатма рационализаторла сĕнӳсем нумай параççĕ. Ку енĕпе уйрăмах В. Белов юлташ пуçарулăх кăтартать. Вăл резьба касмалли станок тума сĕнӳ панă, унăн схемине те хăех хатĕрленĕ. Вăл савалакан станока тухăçлăрах ĕçлеттерес шутпа тепĕр сĕнӳ тăратнă. Ытти рабочисен те творчествăлла активлăхĕ пысăк. Кăçалхи январь уйăхĕнче кăна рабочисем, инженерсемпе техниксем рационализаторла 10 сĕнӳ ытла тăратнă, вĕсенчен виççĕшне производствăна кĕртнĕ.

Çĕмĕрлери йывăç япаласем тăвакан завод коллективĕ ССР Союзĕн халăх хуçалăхне 1956—1960 çулсенче аталантармалли улттăмĕш пилĕк çуллăх план тĕлĕшпе КПСС XX-мĕш съезчĕ паракан Директивăсен проекчĕ тулли кăмăлпа кĕтсе илчĕ. Цехсемпе участоксенче çак хаклă документа сӳтсе явасçĕ, вуншар агитаторсем каласусем иртереççĕ. Заводра ĕçлекенсем техникăна малалла аталантарас, производствăна лайăхрах йĕркелес енĕпе кирлĕ сĕнӳсемпе канашсем параççĕ. Акă, тĕслĕхрен, заводра пĕр йышши детальсем нумай туса кăлараççĕ. Анчах чылай участоксене çав детальсене алă вĕççĕн тума тивет. Çапла вара ĕç тухăçлăхĕ вăраххăн ӳссе пырать. Рабочисем пĕрешкел детальсем тунă çĕрте штампсемпе ытларах усă курма кирли çинчен ыйту лартаççĕ. Хальхи вăхăтра цехсенче грузсем куçарасси те йывăр ĕç шутланать. Малашне çак ĕçе те механизацилемелле пулать. Мастерскойсене сăрлас ĕçе механизацилеме сĕнеççĕ. Ытти сĕнӳсем те нумай. Завод дирекцийĕн, партипе профсоюз организацийĕсен рабочисен сĕнĕвĕсене тĕплĕн пăхса тухмалла, улттăмĕш пилĕкçуллăхра продукци туса кăларассине тăтăшах ӳстерсе пыма тивеçлĕ условисем туса памалла.

Завод коллективĕн политикăлла тата производствăлла хастарлăхĕ пысăк. Улттăмĕш пилĕкçуллăхра социализмла промышленноçпа ялхуçалăхне хăватлăн аталантарма, ĕçсыннисен пурнăçне малалла лайăхлатма палăртни рабочисене чун-чĕререн савăнтарать. Вĕсен пĕр шухăш-кăмăл: Тăван çĕршыв валли продукци ытларах та ытларах туса кăларасси.

Завод коллективĕ съезд ячĕпе ăмăртăва хутшăнса, планран иртерсе 15 автомастерской туса кăларма, ĕç тухăçлăхне ӳстерме, продукции хăйне ларакан хакне йӳнетме обязательство илнĕ.

— Эпир хамăр обязательствăсене срокчен пурнăçлассишĕн пĕтĕм вăя хурса кĕрешетпĕр, Коммунистсен партийĕн XX-мĕш съездне производствăра çĕнĕ çитĕнӳсем тунипе кĕтсе илетпĕр,— тет заводăн главнăй инженерĕ Шустов юлташ.

Н. ГЕРАСИМОВ.

Укерчĕк çинче: Çĕмĕрлери йывăç япаласем тăвакан заводри облицовщик А. Щербаков (сулахайри) тата маляр П. Щеглова юлташсем ĕçре.

„Аврора“ колхоз ӳсĕмĕ

Икĕ-виçĕ çул каялла «Аврора» колхоз хуçалăхпа экономика тĕлĕшĕнчен районти ытти колхозсенчен нимĕнпе те уйрăлса тăман. Анчах юлашки çулсем хушшинче артель пурнăçĕнче пысăк улшăнусем пулса иртрĕç. Унăн экономики палăрмаллах вăйланчĕ. Иртнĕ ялхуçалăх çулĕнче тырпул, çĕрулми тата аш-какай туса илес енĕпе çак колхоз районта мала тухрĕ, кашни 100 гектар çĕр пуçне сĕт суса илес енĕпе Сталин ячĕпе тăракан колхоз хыççăн иккĕмĕш вырăн йышăнчĕ.

Çакăн пек улшăну вăл ăнсăртран, хăй тĕллĕн пулман. Артель членĕсем тырпул тата выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем туса илессине ӳстерес тĕлĕшпе партипе правительство панă заданисене пурнăçлассишĕн чун-чĕререн тăрăшса ĕçлеççĕ. Социализмла ăмăрту колхозниксене малта пыраканнисене хăваласа çитсе вĕсенчен иртсе кайма, çĕнĕрен те çĕнĕ çитĕнӳсем тума хавхалантарать. Халĕ кӳршĕри «Красное Сормово» колхоз членĕсен те «Аврора» колхоз ĕçченĕсенчен пример илмелле, вĕсенчен вĕренмелле пулса тăчĕ. Мĕншĕн тесен «Аврора» колхоз иртнĕ ялхуçалăх çулĕнче «Красное Сормово» колхозран кашни гектартан 6,3 центнер ытларах тĕштырă, 35 центнер ытларах çĕрулми туса илчĕ, кашни ĕнерен 500 килограмм нумайрах сĕт суса илчĕ, акăнакан çĕрсен кашни 100 гектарĕ пуçне 25 центнер ытларах сысна ашĕ илчĕ.

Артелĕн обществăлла хуçалăхне малалла аталантарас, унăн тупăшне ӳстерес енĕпе, тен, çитес çулсенче «Аврора» колхоз членĕсем Муркаш колхозне те хуса çитсе иртсе кайĕç. Мала тухас тεкеннисене тытса чарма çук вĕт! 1955 çулта Сталин ячĕпе тăракан колхоз хуçалăхра усă куракан çĕрсен кашни гектарĕ пуçне 926 тенкĕ тупăш илнĕ пулсан, «Аврора» колхозăн 867 тенке çитрĕ. Уйрăмлăхĕ 59 тенкĕре кăна. Паллах, тупăш илессипе муркашсене çитсе иртсе кайма çăмăлах мар, çакна пиккикассисем лайăх ăнланаççĕ, çапах та вĕсем çак ĕмĕт-шухăша сухатмаççĕ. Колхоз выльăх витисем çĕнĕрен лартать. Ĕç тухăçлăхне ӳстерес шутпа фермăри йывăр ĕçсене механизацилеççĕ. Иртнĕ çулта колхоз двигатель туянчĕ, электричество вăйĕпе авăн çапмалла турĕ.

Малашнехи пысăкрах ĕçсем çинчен сăмах хускатсан, артель членĕсем çапла калаççĕ: «Тăрăшсан пулатех. Ĕçри ăнăçлăхсем пĕтĕмпех хамăртан килеççĕ». Чăн калаççĕ вĕсем. Мĕншĕн тесен ĕçри çитĕнӳсем, чи малтан, çынсенчен, вĕсем мĕнле ĕçленинчен, йывăрлăхсене хăюллăн çĕнтерсе пыма пултарнинчен килеççĕ. «Аврора» колхоз ĕçченĕсен пурин те пĕр тĕллев—паян ĕнерхинчен, ыран паянхинчен лайăхрах ĕçлесси. Юратнă Тăван çĕршыва тырă, пахча çимĕç, аш-какай, сĕт-çу, çăмарта, çăм ытларах та ытларах туса парассишĕн кĕрешеççĕ колхозниксем.

Колхозăн выльăх-чĕрлĕх фермисем ялтан икĕ километрта, Шатулăх тăвайккинче вырнаçнă. Выльăх-чĕрлĕх пăхакансем кунне-çĕрне пĕлмесĕр пĕтĕм вăя хурса ĕçлеççĕ. Тамара Осипова, комсомолăн облаçри конференцийĕн делегачĕ пулнăскер, пуринчен те хастарлăрах ĕçлет. Вăл партин XX-мĕш съезчĕ тĕлне кашни ĕçерен 500 литртан кая мар сĕт суса илме сăмах панă, çакна чыслăн пурнăçласа пырать.

...Каçхине колхоз правленине зоотехникпа яштака, тулли пит-куçлă хĕрача пырса кĕчĕç.

— Ну, мĕнле ĕçсем, Зоя?—ыйтрĕ председатель.

— Пурте йĕркеллех, Василий Титович,—ответлерĕ хĕрача.—Ĕнесенчен паян ĕнерхинчен ытларах сĕт суса илтĕмĕр.

Унтан кăштах чăрăнса тăчĕ те çапла каларĕ:

— Василий Титович, пире «Красный Октябрь» колхозăн ферма работникĕсем ăмăртăва чĕннĕ, тет. Кун çинчен пире райком инструкторĕ Мартынов юлташ пĕлтерчĕ.

— Аван. Пирĕн те вара пашалукассисенчен кая юлма юрамасть.

— Кая юлмастпăр!—татăклăн каларĕ Зоя Хлебникова, председатель сăмахне çирĕплетсе.

«Аврора» колхоз ĕçченĕсем улттăмĕш пилĕк çуллăх план тĕлĕшпе партин XX-мĕш съезчĕ паракан директивăсен проектне пысăк сĕкленӳпе кĕтсе илчĕç. Партин XX-мĕш съезчĕ ячĕпе социализмла ăмăртăва хутшăнса, çĕнĕ ялхуçалăх çулĕнче кашни гектартан 18 центнер тĕштырă, кашни 100 гектар çĕр пуçне 119 центнер сĕт, 40 центнер сысна ашĕ тата кашни чăхран 70 çăмарта илме сăмах парĕç. Çакна вĕсем пурнăçлĕç.

П. ПАВЛОВ.

«Аврора» колхоз, Муркаш районĕ.

Суйлавçăсен наказĕсене пурнăçламалла

УЛАТАР. Ĕçсынни депутачĕсен вырăнти Совечĕсене суйланă вăхăтра суйлавçăсем хăйсен депутачĕсене нумай наказсемпе сĕнӳсем панă. Уйрăмах хулана илемлетес, коммунальнăй хуçалăх учрежденийĕсемпе йăла учрежденийĕсен ĕçĕсене лайăхлатас тĕлĕшпе чылай сĕнӳсем тăратнă.

Коммунальнăй хуçалăх пайĕ хулана илемлетес тĕлĕшпе 1955 çулта чылай ĕçсем туса иртернĕ. Благоустройство ĕçĕсем валли уйăрнă укçа-тенкĕпе пĕтĕмĕшпех усă курнă, çĕнĕ çулсем тунă, киввисене юсанă, кĕперсемпе тротуарсене юсанă, садсем тата йывăççем нумай лартнă тата ытти ĕçсем тунă. Анчах суйлавçăсен наказĕсемпе сĕнĕвĕсенчен чылайăшĕ пурнăçланмасăрах юлнă. Чылай предприятисемпе организацисем, пурăнмалли çуртсен управленийĕ тата уйрăм çуртсен хуçисем тротуарсене юсас тĕлĕшпе нимĕн чухлĕ те тăрăшман. Суйлавçăсем чугун çул урлă йывăç пусма тума, Кузнецки урам сывăхĕнчи кӳлĕне тасатма наказ панă пулнă. Анчах ăна та, кăна та пурнăçламан. Çавăн пекех Комиссариатски урамра çырма пулса каясран шыва аякалла юхтармалли йывăç валак тума пуçланă пулнă, ăна та туса çитермен. Фрунзе, Котовский тата ытти урамсенче шыв ăсмалли колонка тума палăртнă. Çакна иртнĕ çулхи иккĕмĕш кварталтах туса çитермелле пулнă. Суйлавçăсен çак наказĕ те пурнăçланмасăрах юлнă.

Кĕпе çумалли вырăн Сăр çинче пĕр çĕрте анчах, ăна та хӳме тытса çавăрман. Юлашки вăхăтра хулари коммунальнăй мунча та япăх ĕçлеме пуçланă. Час-часах кунта вĕри шыв пулмасть, çăвăнмалли пӳлĕмсенче те температура пĕр пек ăшă тăмасть, хăш чухне çынсен сивĕ пӳлĕмсенчех çăвăнма тивет.

Хулара автобуссем çителĕклĕ, анчах хуларан рабочисем пурăнакан поселока автобуссем çӳремеççĕ. Ку районта пурăнакан суйлавçăсем автобуссем çӳремелле тăвас пирки темиçе хут та ыйту лартнă, анчах вĕсен ыйтăвне халĕ те тивĕçтерме шутламаççĕ-ха.

Хулари коммунальнăй хуçалăх пайĕн суйлавçăсем панă наказсене пурне те пурнăçлассишĕн тăрăшмалла.

Н. АННЕНКОВ.

Яланхи коммунальнăй хуçалăх комиссин председателĕ.

Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетекенсен кунĕ

ЧКАЛОВСКИ. Мичурин ячĕпе тăракан колхоз членĕсем иртнĕ çул выльăх-чĕрлĕх йышĕпе тухăçлăхне чылай ӳстерчĕç. Кашни ĕнерен вăтам шутпа 1.415 килограмм сĕт суса илнĕ, кашни 100 сурăх пуçне 116 путек пăхса ӳстернĕ. Выльăх-чĕрлĕх йышĕпе тухăçлăхне ӳстермелли плансене чылай иртерсе тултарнă.

Колхозра выльăх-чĕрлĕх ĕрчетекенсен, бригадирсен кунĕсене иртереççĕ. Унта фермăсен заведующийĕсем, свинаркăсем, дояркăсем, ялхуçалăх специалисчĕсем, конюхсем, чăх-чĕп тата сурăх пăхакансем хăйсен ĕç опычĕсем çинчен каласа параççĕ, çитменлĕхсене пĕтермелли майсене, халиччен усă курман резервсене тупса палăртаççĕ. Нумаях пулмасть иртернĕ «Выльăх-чĕрлĕх пăхакансен кунĕнче» колхоз председателĕ А. Ситов юлташ «1955 çулта выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес енĕпе тунă ĕçсен итогĕсем тата 1956 çулхи задачăсем çинчен», МТС главнăй зоотехникĕ М. Тайкин юлташ—«Выльăхсене хĕлле мĕнле пăхмалли çинчен», ветеринари фельдшерĕ А. Иванова юлташ—«Çамрăк выльăхсене лайăх пăхса çитĕнтересси çинчен» тунă докладсене итлесе сӳтсе явнă. Ĕне фермин заведующийĕ А. Крылов тата Е. Думилинăпа Н. Крылова дояркăсем хăйсен ĕç опычĕсемпе паллаштарчĕç. Н. Крылова юлташ иртнĕ ялхуçалăх çулĕнче хăйне çирĕплетсе панă 11 ĕнерен 11 пăру пăхса çитĕнтернĕ, кашни ĕнерен 1.639 килограмм сĕт суса илнĕ.

Партин XX-мĕш съезчĕ улттăмĕш пилĕк çуллăх план тĕлĕшпе паракан Директивăсен проекчĕпе хавхаланса, колхозниксем 1956 çулта кашни ĕнерен 1.800 килограмм сĕт суса илме, кашни сурăхран 3 килограмран кая мар çăм илме, сысна ами пуçне 16-шар çура пăхса ӳстерме, кашни чăхран 90 çăмарта илме, кăçал 350 сысна самăртма, кашни сыснан чĕрĕ виçине 90 килограма çити самăртса çитерме пулчĕç.

«Бригадирсен кунĕнче» партин XX-мĕш съезчĕ уçăлнă кун тĕлне çуракине хатĕрлесе çитме конкретлă обязательствăсем йышăннă.

И. МАРКОВ.

Ача амăшĕсемшĕн тăрăшни

КАНАШ. (Хамăр корр.). Иртнĕ çулталăк хушшинче нумай ача амăшĕсемпе пĕччен пурăнакан хĕрарăмсене хулари финанс пайĕ урлă 868.100 тенкĕ пособи тӳленĕ. Ку вăл 1954 çулхинчен 32 пин тенкĕ ытларах пулать. 13 ача çуратса пăхса ӳстернĕ Т. Забавина вунă çул хушшинче 40.100 тенкĕ пособи илнĕ.

Нумай ачаллă амăшĕсенчен вунă хĕрарăм «Ача амăшĕ-героиня» хисеплĕ ята илнĕ. Иртнĕ çулта кăна тăвата хĕрарăма «Ача амăшĕ-героиня» ятне панă тата 74 хĕрарăма орденсемпе медальсем парса наградăланă.

Кĕскен

Çамрăк боксерсем. Тăвайĕнчи вăтам шкулта бокс секцийĕ ĕçлет. Çак кунсенче унта çамрăк боксерсен ăмăртăвне иртternĕ. Виçĕ категори тăрăх ăмăртăва 16 çын хутшăннă.

Колхозри драма кружокĕ. Шупашкар районĕнчи Водопьянов ячĕпе тăракан колхозри драма кружокĕ 24 çынна пĕрлештерсе тăрать. Драма кружокĕ колхозри клуб сцени çинче спектакльсем кăтартнисĕр пуçне сывăхри колхозсенче те концертсем иртерет.

Пĕтĕм Союзри ялхуçалăх выставкин участникĕсене наградăсемпе премисем пани

Пĕтĕм Союзри ялхуçалăх выставкин Главнăй Комитечĕ 1955 çулхи декабрĕн 23-мĕшпе 28-мĕшĕнче йышăннă постановленисем тăрăх пирĕн республикăри çак колхозсемпе МТС-сене тата ялхуçалăх ĕçченĕсене наградăсемпе премисем панă:

ВАРНАР РАЙОНĔ ТĂРĂХ

1. Сталин ячĕпе тăракан колхоза кашни ĕнерен вăтам шутпа 2.717 килограмм сĕт, кашни сысна аминчен 16,2 çура, акăнакан çĕрĕн кашни 100 гектарĕ пуçне 42,2 центнер сысна ашĕ илнĕшĕн, кашни гектартан кукуруза симĕс масси 300 центнер, кукуруза пуçĕ 166 центнер, çĕрулми 245 центнер пухса кĕртнĕшĕн—1-мĕш степеньлĕ диплом.

2. Сталин ячĕпе тăракан колхоз председательне С. К. Короткова— «Победа» автомобиль.

3. Колхоз зоотехникне А. П. Блинова—Пысăк кĕмĕл медаль.

4. Уй-хир бригадин бригадирне П. Д Пупина, вăл ертсе пыракан бригада кашни гектартан 248 центнер çĕрулми пухса кĕртнĕшĕн—сехет.

5. Уй-хир бригадин бригадирне А. Д. Ашанина, вăл ертсе пыракан бригада кашни гектартан 254 центнер çĕрулми пухса кĕртнĕшĕн—Пĕчĕк кĕмĕл медаль.

6. Колхозри ĕне фермин заведующине А. А. Ситухина, вăл ертсе пыракан фермăра кашни ĕнерен вăтам шутпа 2.717 килограмм сĕт суса илнĕшĕн—Пĕчĕк кĕмĕл медаль.

7. Н. П. Ванна дояркăна хăйне çирĕплетсе панă кашни ĕнерен 3.266 килограмм сĕт суса илнĕшĕн—Пысăк кĕмĕл медаль тата сехет.

8. А. С. Хлянова дояркăна хăйне çирĕплетсе панă кашни ĕнерен 3.170-шер килограмм сĕт суса илнĕшĕн—Пысăк кĕмĕл медаль тата сехет.

9. Н. П. Першуткина дояркăна хăйне çирĕплетсе панă кашни ĕнерен 2.944 килограмм сĕт суса илнĕшĕн—Пĕчĕк кĕмĕл медаль.

10. Н. Н. Жаркова дояркăна хăйне çирĕплетсе панă кашни ĕнерен 2.850 килограмм сĕт суса илнĕшĕн—Пĕчĕк кĕмĕл медаль.

11. А. П. Чигитова дояркăна хăйне çирĕплетсе панă кашни ĕнерен вăтам шутпа 2.822 килограмм сĕт суса илнĕшĕн—Пĕчĕк кĕмĕл медаль.

12. Вăрнар машина-трактор станцине хăй ĕçлесе паракан колхозсенче вăтам шутпа кашни гектартан 166,3 центнер çĕрулми, 271 центнер кукуруза симĕс масси пухса кĕртнĕшĕн тата акăнакан çĕрĕн кашни 100 гектарĕ пуçне 10,6 центнер сысна ашĕ илме пулăшнăшăн—II-мĕш степеньлĕ диплом.

13. МТС-ăн главнăй инженерне П. Д. Шерхалова—пысăк кĕмĕл медаль тата радиоприемник.

14. Трактор бригадин бригадирне И. Т. Пронькина—Пĕчĕк ылтăн медаль тата радиоприемник.

15. Трактор бригадин помощникне Н. М. Смирнова—сехет.

16. В. В. Ефремов тракториста—Пĕчĕк кĕмĕл медаль тата сехет.

17. И. Н. Доманин тракториста—сехет.

ĔЛЧĔК РАЙОНĔ ТĂРĂХ

1. Ворошилов ячĕпе тăракан колхоза тырпул тухăçлăхĕпе выльăх-чĕрлĕхрен продукци илессине ӳстернĕшĕн тата усă куракан кашни гектар çĕртен 1.549 тенкĕ тупăш илнĕшĕн—1-мĕш степеньлĕ диплом.

2. Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз председательне В. В. Зайцева—Пысăк ылтăн медаль тата «Победа» автомобиль.

3. Колхозри парти организацийĕн секретарьне А. А. Железова—Пысăк ылтăн медаль тата мотоцикл.

4. Колхоз агрономне Е. И. Васильевăна—Пысăк кĕмĕл медаль тата велосипед.

5. Колхоз зоотехникне А. Ф. Кузьминана—Пысăк кĕмĕл медаль тата сехет.

6. Колхоз электрикне Ф. Д. Димитриева ялхуçалăх ĕçĕсене электрификацилес енĕпе ӳсĕмсем тунăшăн—Пĕчĕк кĕмĕл медаль.

7. Ĕне фермин заведующине Н. Е. Лесниковăна, вăл ертсе пыракан фермăра иртнĕ хуçалăх çулĕнче кашни ĕнерен вăтам шутпа 2.195-шер килограмм е малтанхи çулхинчен 530-шар килограмм сĕт ытларах суса илнĕшĕн—Пысăк кĕмĕл медаль тата çĕвĕ çĕлемелли машина.

8. Чăх-чĕп фермин заведующине З. В. Федоровăна, вăл ертсе пыракан фермăра акăнакан çĕрĕн кашни 100 гектарĕ пуçне 3.100, кашни чăхран 71 çăмарта илнĕшĕн—Пысăк кĕмĕл медаль тата сехет.

9. Уй-хир бригадин бригадирне И. К. Чермакова, вăл ертсе пыракан бригада кашни гектартан 8,1 центнер кантăр сӳсĕ пухса кĕртнĕшĕн—Пĕчĕк кĕмĕл медаль.

10. Уй-хир бригадин бригадирне В. Н. Деомидова, вăл ертсе пыракан бригада кашни гектартан вăтам шутпа 8,0 центнер кантăр сӳсĕ пухса кĕртнĕшĕн—Пĕчĕк кĕмĕл медаль.

11. Кантăр акса тăвас енĕпе ĕçлекен звенон звеньевойне М. С. Медведевăна, вăл ертсе пыракан звено кашни гектартан вăтам шутпа 8,3 центнер кантăр сӳсĕ пухса кĕртнĕшĕн—Пĕчĕк кĕмĕл медаль.

12. Пахча çимĕçпе сад бригадин бригадирне Г. Г. Свеклова, вăл ертсе пыракан бригада кашни гектартан вăтам шутпа 466 центнер купăста, 303 центнер хăяр тата 374 центнер столовăй кăшманĕ илнĕшĕн—Пĕчĕк кĕмĕл медаль.

13. Выльăх апачĕ хатĕрлес енĕпе ĕçлекен бригадăн бригадирне А. М. Шавкина, вăл ертсе пыракан бригада кашни гектартан вăтам шутпа 1.137 центнер тымарçимĕç, 629 центнер кукуруза симĕс масси тата ытти силос хывмалли культурăсене 526 центнер пухса кĕртнĕшĕн—Пысăк кĕмĕл медаль тата сехет.

14. Уй-хир бригадин бригадирне В. Ф. Дергунова, вăл ертсе пыракан бригада кашни гектартан вăтам шутпа 8,0 центнер кантăр сӳсĕ тата 24,2 центнер вир пухса кĕртнĕшĕн—Пĕчĕк кĕмĕл медаль.

15. Р. М. Люллина свинаркăна хăй самăртнă 90 сыснаран кашнин чĕрĕ виçине уйăхра 19,7 килограмм хутшăнтарса пынăшăн—Пĕчĕк кĕмĕл медаль.

16. Л. К. Чермакова свинаркăна хăй самăртнă 90 сыснаран кашнин чĕрĕ виçине уйăхра 19,7 килограмм хутшăнтарса пынăшăн—Пĕчĕк кĕмĕл медаль.

17. Н. Н. Портнова птичницăна — Пĕчĕк кĕмĕл медаль.

18. Кантăр акса тăвас енĕпе ĕçлекен звенон звеньевойне К. П. Лаврентьевăна, вăл ертсе пыракан звено кашни гектартан вăтам шутпа 8,2 центнер кантăр сӳсĕ пухса кĕртнĕшĕн—Пĕчĕк кĕмĕл медаль.

19. Кантăр акса тăвас енĕпе ĕçлекен звенон звеньевойне Е. Г. Царевăна, вăл ертсе пыракан звено кашни гектартан вăтам шутпа 8,2 центнер кантăр сӳсĕ пухса кĕртнĕшĕн — Пĕчĕк кĕмĕл медаль.

20. Кантăр акса тăвас енĕпе ĕçлекен звенон звеньевойне Н. А. Алюновăна, вăл ертсе пыракан звено кашни гектартан вăтам шутпа 8,2 центнер кантăр сӳсĕ пухса кĕртнĕшĕн—Пĕчĕк кĕмĕл медаль.

21. Свердлов ячĕпе тăракан колхоз бригадирне А. М. Доброхотова, вăл ертсе пыракан бригада кашни гектартан вăтам шутпа 385 центнер хăяр пухса кĕртнĕшĕн — кĕсьене чиксе çӳремелли сехет.

22. Елчĕк МТС-ĕн 16-мĕш трактор бригадин трактористне М. П. Сапожникова, вăл ĕçленĕ Ворошилов ячĕпе тăракан колхозра 90 гектар çинчен кашни гектартан вăтам шутпа 6,87 центнер кантăр сӳсĕ пухса кĕртнĕшĕн—Пĕчĕк кĕмĕл медаль.

23. Елчĕк МТС-ĕн 16-мĕш трактор бригадин трактористне П. И. Самарина, вăл ĕçленĕ Ворошилов ячĕпе тăракан колхозра 90 гектар çинчен кашни гектартан вăтам шутпа 6,87 центнер кантăр сӳсĕ пухса кĕртнĕшĕн—Пĕчĕк кĕмĕл медаль.

24. Елчĕк МТС-ĕн 16-мĕш трактор бригадин трактористне И. А. Михайловскине, вăл ĕçленĕ Ворошилов ячĕпе тăракан колхозра 90 гектар çинчен кашни гектартан вăтам шутпа 6,87 центнер кантăр сӳсĕ пухса кĕртнĕшĕн—Пĕчĕк кĕмĕл медаль.

ЕТĔРНЕ РАЙОНĔ ТĂРĂХ

1. Буденный ячĕпе тăракан колхоза кашни ĕнерен вăтам шутпа 3.016 килограмм сĕт, кашни 100 ĕнерен 98,6 пăру, кашни сурăхран 5,1 килограмм çăм, кашни сысна аминчен 16,5 çура, акăнакан çĕрсен кашни 100 гектарĕ пуçне 129 килограмм çăм, 13 центнер сысна ашĕ, 3.216 çăмарта илнĕшĕн, кашни гектартан 198,2 центнер çĕрулми пухса кĕртнĕшĕн тата çамрăк сада лайăх пăхса ӳстернĕшĕн—I-мĕш степеньлĕ диплом.

2. Буденный ячĕпе тăракан колхоз председательне Ф. П. Юхтанова—Пысăк ылтăн медаль тата мотоцикл.

3. Колхозри ĕне фермин заведующине Б. И. Скребкова—Пысăк кĕмĕл медаль тата велосипед.

4. А. С. Селиванова дояркăна хăйне çирĕплетсе панă кашни ĕнерен вăтам шутпа 3.462 килограмм сĕт суса илнĕшĕн—Пĕчĕк ылтăн медаль тата çĕвĕ çĕлемелли машина.

5. З. А. Андреева дояркăна хăйне çирĕплетсе панă кашни ĕнерен вăтам шутпа 3.146 килограмм сĕт суса илнĕшĕн—Пысăк кĕмĕл медаль тата велосипед.

6. А. Н. Абрамова дояркăна хăйне çирĕплетсе панă кашни ĕнерен вăтам шутпа 3.118 килограмм сĕт суса илнĕшĕн—Пысăк кĕмĕл медаль тата велосипед.

7. Колхозри аслă овцевода Н. М. Крынецкине ӳлăх-çарансемпе кĕтӳ çӳретмелли вырăнсен кашни 100 гектарĕ пуçне 129 килограмм, кашни сурăхран 5,1 килограмм çăм илнĕшĕн тата кашни 100 сурăх пуçне 140 путек пăхса ӳстернĕшĕн—Пысăк кĕмĕл медаль.

8. А. Л. Миронов овцевода—Пĕчĕк кĕмĕл медаль.

9. В. В. Юхтанова птичницăна хăйне çирĕплетсе панă 1.000 пуç чĕппе пилĕк уйăха çитиччен сывă та тĕрĕс-тĕкел пăхса усранăшăн—Пĕчĕк кĕмĕл медаль.

10. Маленков ячĕпе тăракан колхоза выльăх-чĕрлĕх тата чăх-чĕп ĕрчетес ĕçре ӳсĕмсем тунăшăн—автопоилка.

11. Маленков ячĕпе тăракан колхоз председательне М. Н. Князькова—Пысăк кĕмĕл медаль.

12. Колхозри ĕне фермин заведующине Е. В. Щетининăна, вăл ертсе пыракан фермăра кашни ĕнерен вăтам шутпа 2.287 килограмм сĕт суса илнĕшĕн тата кашни 100 ĕне пуçне 107 пăру пăхса ӳстернĕшĕн—Пĕчĕк кĕмĕл медаль.

13. Колхозри аслă кĕтӳçĕне А. И. Бурашникова кашни сурăхран 4,6 килограмм, ӳлăх-çарансемпе кĕтӳ çӳретмелли вырăнсен кашни 100 гектар пуçне 0,78 центнер çăм илнĕшĕн тата кашни 100 сурăх пуçне 106 путек пăхса ӳстернĕшĕн—Пĕчĕк кĕмĕл медаль.

14. «Родина» колхозри аслă птичницăна И. Е. Ефимовăна хăйне çирĕплетсе панă чĕпсене пилĕк уйăха çитиччен лайăх пăхса ӳстернĕшĕн тата акăнакан çĕрсен кашни 100 гектарĕ пуçне 3.030 çăмарта илнĕшĕн—Пĕчĕк кĕмĕл медаль.

15. Хрущев ячĕпе тăракан колхозри аслă птицевода И. Я. Агакова хăйне çирĕплетсе панă чĕпсене пилĕк уйăха çитиччен лайăх пăхса ӳстернĕшĕн—Пĕчĕк кĕмĕл медаль тата сехет.

16. Етĕрне МТС-ĕнчи «СКГ-6» машинăн машинистне В. М. Яковлева 176,66 гектар çĕр çине кукурузăна тăваткал тĕмĕн лайăх акса панăшăн—Пĕчĕк кĕмĕл медаль.

17. Етĕрне МТС-ĕн трактористне В. С. Коливашкона «ТЭК-2» картофелекопалкăпа 115,5 гектар çинчен çĕрулми лайăх пухса кĕртнĕшĕн—Пĕчĕк кĕмĕл медаль.

18. Етĕрне МТС-ĕн машинистне М. Г. Цыганова 96 гектар çинчи йĕтĕне лайăх пахалăхпа пухса кĕртнĕшĕн—Пĕчĕк кĕмĕл медаль.

УЛАТĂР РАЙОНĔ ТĂРĂХ

1. «Победа» колхоза акăнакан çĕрĕн кашни 100 гектарĕ пуçне 16,8 центнер сысна ашĕ, ӳлăх-çарансемпе кĕтӳ çӳретмелли вырăнсен кашни 100 гектарĕ пуçне 61 килограмм çăм илнĕшĕн, кашни гектартан 20,3 центнер вир, пĕр çул ӳсекен курăксен утине кашни гектартан 47,2 центнер пухса кĕртнĕшĕн тата кашни ĕнерен 3.143 килограмм сĕт суса илнĕшĕн—библиотека.

2. «Победа» колхоз председательне М. С. Митина—радиоприемник.

3. Колхозри П. А. Яшина дояркăна хăйне çирĕплетсе панă кашни ĕнерен вăтам шутпа 3.143 килограмм сĕт суса илнĕшĕн—Пĕчĕк ылтăн медаль тата çĕвĕ çĕлемелли машина.

4. Колхозри О. А. Лебедева дояркăна хăйне çирĕплетсе панă кашни ĕнерен 3.096 килограмм сĕт суса илнĕшĕн—Пысăк кĕмĕл медаль тата сехет.

5. Колхозри З. П. Данилина дояркăна хăйне çирĕплетсе панă кашни ĕнерен 3.136 килограмм сĕт суса илнĕшĕн—Пысăк кĕмĕл медаль тата сехет.

(Малалла пулать).

Тĕнчери лару-тăру

СОЦИАЛИЗМ ЛАГЕРĔНЧИ ÇĔРШЫВСЕМ МИРШĔН, ХАЛĂХСЕН ХĂРУШСĂРЛĂХĔШĔН ПЫРАКАН КĔРЕШŸРЕ

Кăçалхи январь уйăхĕн вĕçĕнче Совет Союзĕ тата социализм лагерĕнчи мĕнпур çĕршывсем мире çирĕплетессишĕн, халăхсен хăрушсăрлăхĕшĕн пыракан кĕрешĕве сĕнĕрен пысăк вăй хунине кăтартакан икĕ событи пулса иртрĕ. Кунта СССР Министрĕсен Совечĕн Председателĕ Н. А. Булганин США президенчĕ Д. Эйзенхауэр патне янă послани çинчен тата Варшавăра тунă договора хутшăннă çĕршывсем Прагăра алă пуснă Деклараци çинчен сăмах пырать.

Паллă ĕнтĕ, Н. А. Булганин Эйзенхауэр президент патне янă посланире США-па Совет Союзĕ хушшинче пĕр-пĕрне туслă пурăнасси тата килĕштерсе ĕçлесси çинчен договор тума сĕннĕ. Нимĕн иккĕленмелли те çук, Совет Союзĕпе Америка хушшинчи хутшăнусене лайăхлатни пĕтĕм тĕнчери лару-тăрăва çăмăллатма нумай пулăшнă пулĕччĕ.

«Совет Союзĕ пĕтĕм çĕр чăмăрĕ çинчи простой çынсен интересĕсене асра тытса ĕçлет», тенĕ Н. А. Булганин янă послани пирки Китай писателĕ Ай Фу. СССР сĕнĕвĕ вăл «пурнăçа кĕме пултаракан историлле сĕнŭ» пулса тăрать, тесе çырать Индири «Нав дживан» хаçат.

Совет Союзĕн сĕнĕвĕ «сивĕ вăрçăшăн» тăракансене хытă шиклентерни те ĕнтĕ çак сĕнĕвĕн пысăк вăйĕпе пĕлтерĕшне кăтартса парать. Н. А. Булганин посланийĕнчи сĕнĕве халăхсем кăмăлланине лайăх пĕлсе, США-ри влаçра тăракан ушкăнсенче Совет Союзĕн сĕнĕвĕсене мĕнле майпа сирсе ярасси, çак вăхăтрах «США туслăха хирĕç тăман пек кăтартма» мĕн тăвасси çинчен сӳтсе явма тытăннă, тесе çырать «Нью-Йорк пост» хаçат. Çакнашкал задачăна, паллах ĕнтĕ, татса пама май килмен. Францири «Либерасьон» хаçат, США-ри влаçра тăракан ушкăнсем Н. А. Булганин сĕнĕвне кăмăлламанни çинчен пĕлтерсе, çакна палăртать: США президенчĕн ответĕнчен «США правительствине икĕ тĕрлĕ шухăш канăç паманни курăнать: вăл сивĕ вăрçă позицийĕсене сыхласа хăварасшăн, (сивĕ вăрçăшăн Даллеспа Рэдфорд адмирал хытă тăрăççĕ), çав вăхăтрах Америка халăхĕ миршĕн чунтан тăрăшнине те тивĕçтересшĕн, анчах халăха водородлă бомба та, «вăйлăран вăйлă Фау-2» снарядсем те йăпатма пултараймаççĕ».

Кирек мĕнле пулсан та, Совет Союзĕн сĕнĕвĕпе США-ри влаçра тăракан ушкăнсем кăмăлсăр пулни вăл пĕтĕм тĕнче общественноçĕ курса тăракан факта ӳлăштарма пултараймасть. Ку факт çакна кăтартса парать: Совет Союзĕпе Америка хушшинчи хутшăнусене лайăхлатас, тĕнчери йывăр лару-тăрăва çăмăллатас тесе, Совет Союзĕ хăй мĕн тума пултарнине пĕтĕмпех тăвать, хăй çапла туни «сивĕ вăрçăшăн» тăракансен кăмăлне кайнипе кайманнине пăхса тăмасть.

Мире тата халăхсен хăрушсăрлăхне çирĕплетессишĕн пыракан кĕрешŭре Варшавăра тунă договора хутшăннă государствăсем январĕн 28-мĕшĕнче Прагăра алă пуснă Деклараци питĕ пысăк вырăн йышăнса тăрать. Прагăра алă пуснă Декларацире тĕнчери йывăр лару-тăрăва çăмăллатма, Европăра хăрушсăрлăх туса хума пулăшакан паха та конкретлă сĕнӳсем пур. Çак шута Европăра уйрăм зона тăвасси, ку зонăра хĕçпăшаллă вăйсен йышĕ мĕн чухлĕ пулмаллине тата вĕсем ăçта вырнаçса тămаллине интересленекен государствăсем палăртса памалла тăвасси çинчен, Германи территорийĕнчи хĕçпăшаллă вăйсене, çав шутра Демократиллĕ Германи Республикипе Федеральнăй Германи Республикин хĕçпăшаллă вăйĕсене атомлă хĕçпăшал тытса тăма чарасси çинчен калакан сĕнӳсем кĕрессĕ. Прагăра алă пуснă Декларацире тата çапла тума сĕннĕ: пĕр енчен илсен, Сурĕçр Атлантика союзĕнчи çĕршывсен, тепĕр енчен илсен, Варшавăра тунă договора хутшăннă çĕршывсен хăйсем хушшинче тухса тăракан мĕнпур хирĕçӳсене мирлĕ майсемпе кăна татса пама обязательство илмелле, тенĕ.

«Варшавăра тунă договора хутшăннă государствăсем,—тесе çырать Китайри «Женьминьжибао» хаçат,—хăйсем Прагăра йышăннă Декларацире пĕтĕм Европăри тата пĕтĕм тĕнчери мире çирĕплетесси çинчен çĕнĕ, йышăнма юрăхлă сĕнӳсем пачĕç. Çак сĕнӳсене тӳрĕ кăмăлпа панă, вĕсем вырăнлă та тĕрĕс. Вĕсем мĕнпур çĕршывсенчи халăхсен ĕмĕчĕсемпе килĕшсе тăраççĕ».

Варшавăра тунă договора хутшăннă государствăсем хăйсен Прагăри канашлăвĕнче пуриншĕн те паллă факта—хĕвеланăçĕнчи державăсем Хĕвеланăç Германие çице тăрсах милитаризацилениие, вĕсем васкасах хĕçпăшалланнине асăрхамасăр иртсе кайма пултараймарĕç.

...«Хĕвеланăçĕнчи державăсен паллă ушкăнĕсем, — тенĕ Прагăра алă пуснă Декларацире, — тĕнчери йывăр лару-тăру çăмăлланасран тата государствăсем пĕр-пĕринпе килĕштерсе ĕçлесси аннăн сараласран хăраççĕ. Вĕсем уççăнах вăрçă пулас хăрушă лару-тăрăва сыхласа хăварма, «сивĕ вăрçа» малалла тăсма тăрăшаççĕ, çапла майпа кăна Европăра, — Европăра çеç те мар,—хăйсем тунă çар ушкăнĕсене арканса каясран сыхласа хăварма тата васкасах хĕçпăшалланассине хӳтĕлеме пулать тесе, çапла майпа капиталистсен монополийĕсен ахаль те пысăк усламĕсене татах ӳстерме май килет тесе шутлаççĕ вĕсем».

Çавăнпа та Прагăри канашлу Варшавăра тунă договора хутшăннă государствăсен оборонине тĕреклетес тĕлĕшпе пĕрле пурнăçламалли ĕçсем çинчен тăракан ыйтăва пăхса тухрĕ. Сăмахран, хĕçпăшаллă вăйсен пĕрлештернĕ командованийĕ çинчен калакан положени тата Демократиллĕ Германи Республикин халăх çарĕн контингенчĕсене пĕрлештернĕ хĕçпăшаллă вăйсен составне кĕртесси çинчен решени йышăннă.

«Хăшпĕр политиксем,—тесе çырнă Польшăри «Глос працы» хаçат,—Совет Союзĕн тата социализм лагерĕнчи çĕршывсен мирлĕ пусăрăвĕ вĕсем вăйсăррине кăтартса парать, тесе шутлатчĕç. Çавăн пек вăхăт иртсе кайрĕ ĕнтĕ. Пирĕн лагерĕн хăватне кăтартса паракан фактсем питĕ нумай. Прагăра алă пуснă Декларацири сăмахсенче палăрса тăракан лăпкă вăя курмасăр тăракансем халĕ сахал тупăнаççĕ ĕнтĕ. Çак вăй вăрçăпа аркату ĕçĕ тумасть, творчествăллă строительствăна, халăхсем хушшинчи туслăха, мире хӳтĕлесе тăрать».

ВАШИНГТОНРИ КАЛАÇУСЕН ИТОГĔСЕМ ÇИНЧЕН

Февралĕн 2-мĕшĕнче Вашингтонра США президенчĕ Эйзенхауэрпа Англи премьер-министрĕ Иден хушшинчи калаçусем вĕçленнĕ. Официальнăй йĕркепе пĕлтернинчен çакă курăнать: калаçусем вăхăтĕнче США-па Англин Европăри, Сывăх Хĕвелтухăçĕнчи, Кăнтăр Азипе Кăнтăр-Хĕвелтухăç Азири тата Инçет Хĕвелтухăçĕнчи политикипе çыхăнса тăракан нумай ыйтусене сӳтсе явнă.

Англипе Америкăри хаçатсем пĕлтернине шута илсе, çакăн пек вывод тума пулать: Вашингтонри калаçусен тĕп тĕллевĕ Англипе Америка хушшинчи хирĕçӳсене пĕтересси, тĕнчери чылай ыйтусем тăрăх «пĕрлехи политика» туса хатĕрлесси пулнă. Англипе Америка хушшинчи хирĕçӳсем Сывăх Хĕвелтухăçĕнче уйрăмах уççăн палăрчĕç. Арави сурутравĕ çинчи тата Перси заливĕн районĕнчи нефть çăлкуçĕсемшĕн Америкăпа Англири нефть монополийĕсем пĕр-пĕринпе халĕ хытăрах кĕрешнине пула çав хирĕçӳсем юлашки вăхăтра уйрăмах çивĕчленнĕ.

США-па Англи правительствисем хăйсем хушшинчи тавлашусене, пуринчен малтан Сывăх Хĕвелтухăçĕнчи тавлашусене, йĕркелесе ярайманнине Вашингтонри калаçусен результачĕсем çинчен официальнăй йĕркепе пĕлтернинче те пытарса хăварайман. «Эпир,—тенĕ пĕлтернинче,—Аравипе Перси заливĕ районĕнчи лару-тăру çинчен сӳтсе яврăмăр, çак районти тавлашусемпе хирĕçӳсене уйрăмах шута илтĕмĕр. Эпир çакна шанса тăратпăр: ку хирĕçӳсене туслăн сӳтсе явнипе йĕркелесе яма пулать».

Англири, Америкăри тата Францири хаçатсем Аравири нефть пирки пыракан тавлашусене йĕркелесе яма май пур тенине ĕненмеççĕ. «Вашингтон пост» хаçат çапла çырать: Вашингтонри калаçусем çинчен пĕлтерни вăл пушă, содержанисĕр, шанчăк паман документ пулса тăрать. Францири «Либерасьон» хаçатра каланă тăрăх, Эйзенхауэрпа Иден Англипе Америка хушшинче Сывăх Хĕвелтухăç тата Инçет Хĕвелтухăç районĕсенче тухса тăнă хирĕçӳсене йĕркелесе ярайман. «Вĕсем пичетлесе кăларнă коммюнике, кĕскен каласан,—тесе çырать çак хаçат,—акă мĕне пĕлтерет: «1) Китайпа суту-илӳ тăвас ĕçе вăйлатни Англишĕн питĕ кирлĕ пулсан та, США çак çĕршывпа суту-илӳ тума чарса тăрас шутпа кăларса тăратнă чăрмавсене сахаллатасшăн мар-ха. 2) США Англин Сывăх Хĕвелтухăçĕнчи «çар влияни» политикине пурнăçласа пымашкăн пулăшма килĕшмест. 3) Пĕрлешӳллĕ Штатсем Америка компанийĕсем хăратса тăракан Англин нефть компанийĕсене пулăшма килĕшмеççĕ. Çак виçĕ пункт тăрăх американецсем нимĕнле паллă уступкăсем те туман; вĕсем калаçусене çĕнĕрен пуçламашкăн сăмах панă кăна. Шăпах çапла сăмах панăшăн ĕнтĕ сэр Антони Иден сивĕ вăрçă документĕсем çине алă пусма килĕшнĕ. Çак документсем суйлав умĕнхи кампани тапхăрĕнче Америка правительствишĕн усăллă, анчах вĕсем Антони Иденăн хăйĕн çĕршывĕнчи авторитетне татах та ытларах чакараççĕ».

Калаçусем вĕçĕнче США президенчĕпе Англи премьер-министрĕ «Вашингтонра йышăннă декларации» текенскере пичетлесе кăларнă. «Либерасьон» хаçат шăнах çак документа ĕнтĕ «сивĕ вăрçă документĕ» тесе ят панă. Уççăнах çакă курăнать: Н. А. Булганинпа Н. С. Хрущев Индие, Бирмăна тата Афганистана кайса килнине тĕнчери халăхсем çав тери ырларĕç пулсан, асăннă декларации авторĕсем халăхсен çак шухăш-кăмăлне пĕчĕклетсе кăтартма хăтланнă, Н. А. Булганинпа Н. С. Хрущев çак çĕршывсене кайса килни вăл Совет Союзĕпе Азири çĕршывсем хушшинчи туслă хутшăнусене, экономика енĕпе килĕштерсе ĕçлессине вăйлатас ĕçре питĕ пысăк вырăн йышăнса тăрать. Деклараци авторĕсем США-па Англие начар аталаннă мĕнпур çĕршывсен «чăн-чăн тусĕсем» пек, вĕсен «хӳтĕлекенсем» пек кăтартма хăтланаççĕ.

Вашингтонра пичетлесе кăларнă деклараци авторĕсем «хӳтĕлекенсен», «опекунсен» вырăнне йышăнма ĕмĕтленнине Азипе Африкăри халăхсем сирсе яраççĕ. «Ази ыйтăвĕсене час-часах,—тенĕ Неру хăй февралĕн 2-мĕшĕнче каланă сăмахра,—урăх вырăнсенче, Азие е азиатсене нимĕн чухлĕ те хутшăнтармасăр, татса параççĕ. Халĕ ĕнтĕ ун пек практика кивелсе ситрĕ, анчах унăн юлашкийĕсем пур-ха, Ази ыйтăвĕсене инçетри вырăнсенче, Азири халăхсен шухăшĕсемпе кăмăлĕсене нимĕн чухлĕ те шута илмесĕр татса пама халĕ те хăтланкалаççĕ-ха. Практикăлла политика енчен илсе пăхсан, çапла туни ыйтусене татса пама пулăшмасть. Çак ыйту çине мĕнле те пулин урăхла пăхасси çинчен каламăпăр та ĕнтĕ. Факт çакăн пек: хăйсене шута илмесĕр ан хăварччăр тесе питех те çине тăрса тăрăшакан çĕршер те çĕршер миллион çынсем пур».

Сывăх Хĕвелтухăçĕнчи араб çĕршывĕсем Вашингтонри калаçусем çине питĕ асăрханса пăхрĕç, вĕсем США-па Англи хăйсем хушшинчи хирĕçӳсене çак çĕршывсенчи халăхсем шучĕпе татса пама хăтланса пăхасран тĕрĕссипех шикленеççĕ. «Иденпа Эйзенхауэр хушшинчи калаçусем,—тесе çырнă Египетри «Аль-Хайят» журнал,—Сывăх Хĕвелтухăçĕнчи ыйтусене татса памаççĕ, унта мир тăвасси патне илсе пымаççĕ. Вĕсем ун пек тĕллев лартмаççĕ те. Эйзенхауэрпа Иден тĕнче империализмĕн ыйтăвĕсене татса пама, халăхсене эксплуатацилемелли колонизаторла плансене пĕр-пĕринпе килĕштересси çинчен каласса таталма пухăнаççĕ. «Арабсем пурăнакан Хĕвелтухăçĕнчи ыйтусене унти халăхсем кăна татса пама пултарассине,—тесе çырать Ливанри «Аль-Ахбар» хаçат,—араб çĕршывĕсен пурнăçĕпе кун-çулĕ халĕ ĕнтĕ дипломатилле калаçусенчен, Лондонпа Вашингтонра йышăнакан политикăлла решенисенчен килменнине, ун пек вăхăт ĕмĕрлĕхех иртсе кайнине США-па Англи пачах та шута илмен».

Египетри «Роза эль Юсеф» журнал та çавăн майлах çырать. «Иденпа Эйзенхауэр,— тенĕ журналта,— тĕл пулса калаçма, хăйсем мĕн шутлани çинчен сӳтсе явма пултараççĕ. Анчах та вĕсем хăйсен ирĕкне Сывăх Хĕвелтухăçĕнчи халăхсене йышăнтарма пултараймаççĕ. Сывăх Хĕвелтухăçĕнчи халăхсем... нейтралитет политики тытса пырасшăн, экономика тĕлĕшĕнчен никама та пăхăнса тăрас мар, хăйсен пуянлăхĕсене ют çĕршыв çыннисен аллине парас мар тесе, хăйсен çĕршывĕсене индустриализацилĕсшĕн. Анчах Хĕвеланăçĕнчи державăсем халăхсен çак чи кирлĕ требованийĕсене йышăнасшăн мар». Сывăх Хĕвелтухăçĕнчи халăхсем, Вашингтонра мĕнле решенисем йышăннине пăхмасăр, малашне те хăйсен çулĕпе кайма пĕтĕмпех хатĕр, тесе çырать журнал.

Азипе Африкăн ытти районĕсенчи халăхсем те çавăн пек шухăшлаççĕ, вĕсен шухăш-ĕмĕчĕ те çавăн пек тесе шутлама пулать.

А. ШАХАНОВ.

Н. А. БУЛГАНИНПА ЭЙЗЕНХАУЭР ПĔР-ПĔРИН ПАТНЕ ПОСЛАНИСЕМ ЯНИ ÇИНЧЕН УРĂХ ÇĔРШЫВСЕНЧЕ МĔН ÇЫРАÇÇĔ

ДЕЛИ, февралĕн 4-мĕшĕ. (ТАСС). «Хиндустан таймс ивнинг ньюс» хаçат СССР Министрĕсен Совечĕн председателĕ Н. А. Булганин США президенчĕ Эйзенхауэр патне янă çĕнĕ послани çинчен пĕлтернине пысăк заголовокпа пичетлесе кăларнă. Хаçат Н. А. Булганин Совет Союзĕпе США хушшинче пĕр-пĕринпе туслă пурăнасси тата килĕштерсе ĕçлесси çинчен Договор тума çĕнĕрен сĕнӳ пачĕ тата ытти çĕршывсене те, çав шутра Англипе Франције те, хăйĕнпе çавăн пек договорсем тума сĕнет, тесе уйрăмах палăртать.

МОНТЕВИДЕО, февралĕн 4-мĕшĕ. (ТАСС). Уругвайри «Ла Маньяна», «Эль Диа» тата «Ла трибуна популар» хаçатсем СССР Министрĕсен Совечĕн Председателĕ Н. А. Булганин США президенчĕ Эйзенхауэр патне янă çĕнĕ послани çинчен пĕлтернисене лайăх курăнакан вырăнсенче тата пысăк заголовоксемпе пичетленĕ. «Ла Маньяна» хаçат пĕрремĕш страницăра пысăк саспаллисемпе çапла çырать: «Булганин хăйĕн сĕнĕвĕ çинчен тепĕр хут каласа панă. Вăл Эйзенхауэр патне çĕнĕ çыру янă. Росси ытти çĕршывсене те хăйĕнпе килĕшӳсем тума сĕнет».

Чилири «Эль сигло» хаçат çапла çырать: Н. А. Булганин янă послани «Совет Союзĕ мире тĕреклетес тĕлĕшпе тунă çĕнĕ пысăк ĕç пулса тăрать. Совет Союзĕн сĕнĕвĕсем этемлĕхĕн чун-чĕрери ĕмĕчĕсене палăртса тăраççĕ. Совет Союзĕ тĕнчери йывăр лару-тăрăва çăмăллатас тĕлĕшпе çĕнĕрен тăрăшнине тĕнче общественноçĕ ырласа кĕтсе илчĕ».

ССР СОЮЗĔПЕ НИДЕРЛАНДИ ÇАР КАРАПĔСЕМ ПĔР-ПĔРИН ÇĔРШЫВĔСЕНЧЕ ПУЛАССИ ÇИНЧЕН

СССР правительствипе Нидерланди правительстви çакăн çинчен каласса таталнă: совет çар карапĕсен отрячĕ Роттердама каять, çав вăхăтрах Нидерланди çар карапĕсен отрячĕ Ленинграда килет.

Карапсем пĕр-пĕрин çĕршывĕсенче 1956 çулхи июлĕн 20-мĕшĕнчен пуçласа 24-мĕшĕччен пулмалла.

Икĕ отрядăн та составĕсем пĕр пек пулаççĕ. Карапсен икĕ ушкăнĕнче те пĕр крейсер, икĕ эсминец пулать.

ХĔЛЛЕХИ СПОРТ ĂМĂРТĂВĔСЕМ

Йĕлтĕрçĕсен эстафетăлла ăмăртăвĕнче СССР команди çĕнтернĕ

КОРТИНА Д'АМПЕЦЦО, февралĕн 4-мĕшĕ. (ТАСС спецкорĕ). Ĕнер каçхине конькипе фигурăсем туса ишерĕн ярăнмалли ăмăрту пулса иртнĕ. Австри спортсменĕсем Э. Шварцпа К. Оппельт ылтăн медальсем илме тивĕçлĕ пулнă. Ф. Дафопа Г. Боуден (Канада)—иккĕмĕш, Марианна тата Ласло Надь (Венгри) виççĕмĕш вырăна тухнă.

Февралĕн 4-мĕшĕнче ирхине çунасем (бобслей) çине тăватшарăн ларса хăвăрт ярăнмалли ăмăртусем вĕçленнĕ. Швейцарин пĕрремĕш команди ылтăн медальсем илме тивĕçлĕ пулнă. Иккĕмĕш вырăна Италин иккĕмĕш команди, виççĕмĕш вырăна США-н пĕрремĕш команди тухнă.

Ăмăртăва курма пухăннă нумай çынсем паян пуринчен ытла арçынсен йĕлтĕрпе 4 × 10 километр чупмалли эстафетăлла ăмăртăвне—йĕлтĕрçĕсен енĕпе иртернĕ юлашки ăмăртăва хытă интересленсе пăхса тăнă. Старт паракан вырăна 14 çĕршыври чи вăйлă йĕлтĕрçĕсем пухăннă. Совет Союзĕн командинче çак йĕлтĕрçĕсем пулнă: Ф. Терентьев, П. Колчин, Н. Аникин тата В. Кузин. Совет çĕршывĕнчи йĕлтĕрçĕсен Финлянди командине ытларах ăмăртма тивнĕ.

Эстафетăлла ăмăртура Совет Союзĕн команди мала тухнă. Унăн вăхăчĕ 2 сехет те 15 минут та 30 секунд. Финлянди команди, 2 сехет те 16 минут та 31 секундра тухса, иккĕмĕш вырăн йышăннă. Швеци команди, финиша 2 сехет те 17 минут та 42 секундра пырса çитсе, виççĕмĕш вырăна тухнă.

Çапла ĕнтĕ Совет Союзĕн йĕлтĕрçисем Ф. Терентьев, П. Колчин, Н. Аникин тата В. Кузин 4 × 10 километр чупмалли эстафетăлла ăмăрту енĕпе олимпийăри ылтăн медальсене илнĕ.

СССР хоккей команди—олимпийски хĕллехи вăйăсен чемпионĕ, тĕнче чемпионĕ тата 1956 çулхи Европа чемпионĕ

КОРТИНА Д'АМПЕЦЦО, февралĕн 5-мĕшĕ. (ТАСС). Февралĕн 4-мĕшĕнче каçхине ССР Союзĕпе Канада командисем шайбăпа хоккейла вылянă. Совет спортсменĕсем 2 : 0 шутпа çĕнтернĕ.

Вăйăн пĕрремĕш пайĕ 0 : 0 шутпа, иккĕмĕш пайĕ 1:0 шутпа тата виççĕмĕш пайĕ 1 : 0 шутпа вĕçленнĕ. Совет Союзĕн команди çĕнтернĕ.

Канада командийĕн алăкне шайбăна Совет Союзĕн хоккеисчĕсем Крыловпа Кузин çапса кĕртнĕ.

Çапла вара хĕллехи VII-мĕш олимпийски вăйăсенче ССР Союзĕн сборнăй хоккей команди чаплă çитĕнӳ тунă. Вăл финалти пур тĕлпулусенче те выляса илсе, 10 очко пухма май пур пулсан, 10 очко пухнă. Çак командăра выляксем ытти командăсен алăкне 25 шайба çапса кĕртнĕ, вĕсен алăкне—5 шайба кăна кĕртнĕ. ССР Союзĕн сборнăй команди хĕллехи олимпийски вăйăсен чемпионĕн, тĕнче чемпионĕн тата Европа чемпионĕн ятне илнĕ. Çак командăри кашни хоккеистах виçшер ылтăн медаль пана. США команди—иккĕмĕш, Канада команди виççĕмĕш вырăн йышăннă.

Каçхине, ĕç хыççăн, Элĕк МТС-ĕнчи хĕрлĕ кĕтесе яланах нумайăн пухăнаççĕ. Кунта вĕсем хаçат-журнал е кĕнеке вулаççĕ, шашка е шахмат выляса вăхăта культурăллă иртереççĕ. Музыка юратакансем валли музыка инструменчĕсем пур.

Ӳкерчĕк çинче: машина-трактор станцийĕнчи хĕрлĕ кĕтесре.

П. Ефремов фотоӳкерчĕкĕ.

Профсоюз активĕ валли лекцисем

Чăвашоблпрофсовет Политикăлла тата наукăлла пĕлӳсем саракан обществăн республикăри уйрăмĕпе пĕрле Шупашкар хулинчи профсоюз активĕ тата рабочисемпе служащисем валли кашни тунтикӳнах лекцисем иртерет. Январь уйăхĕнче кунта «Тĕнчери лару-тăру», «Ачасене лайăх вĕренме пулăшасси», «ССР Союзĕнчи социальнăй страховани» темăсемпе лекцисем иртернĕ.

Кашни лекци хыççăнах наука ыйтăвĕпе кино кăтартаççĕ.

Çитес кунсенче кунта «Ачасен ашшĕ-амăшĕсен хăйсен ачисене воспитани парас ĕçри вырăнĕпе авторитечĕ», «ССР Союзĕнче ĕç пирки тухса тăракан тавлашуллă ыйтусене татса пани», «Физкультура тата çынсен ытларах пурăнмалла тăвасси», «Индии шалтипе тулашри политики» темăсемпе лекцисем иртерме палăртнă.

ВАЙЛА ТЫРПУЛШĂН ПЫРАКАН КĔРЕШŸРЕ

КАЛИНИНО. «Гвардеец» колхозри уйхир бригадисем хире тислĕк, вырăнти удобренисем ытларах кăларассишĕн пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлеççĕ. Ăмăртура И. Яковлев коммунист ертсе пыракан 8-мĕш бригада малта пырать. Иртнĕ çулта ку бригада пысăк тухăçлă тĕштырă туса илчĕ. Сăмахран, вăтам шутпа кашни гектартан 17,5-шер центнер сĕлĕ, 21,4 центнер пăрçа пухса-кĕртнĕ. Бригада членĕсем кăçал тата тухăçлă тырă çитĕнтерме сăмах пачĕç. Çак кунсенче уй-хире 420 тонна торфпа тислĕк кăларчĕç, 40 тонна кайăк-кĕшĕк тислĕкĕпе кĕл пухса хатĕрлерĕç.

В. ИВАНОВ.

УЧИТЕЛЬСЕМПЕ АЧАСЕН АШШĔ-АМĂШĔСЕН ТĔЛПУЛĂВĔ

Иртнĕ кануналли кун Муркаш районĕнчи Чуманкассинчи çичĕ çул вĕренмелли шкула вĕренекенсен ашшĕ-амăшĕсем йышлăн пухăнчĕç. Уйрăм класс пӳлĕмĕсенче вĕренӳре кирлĕ пособисемпе вĕренекенсен ĕçĕсен выставкине йĕркеленĕ, ашшĕ-амăшĕсен комитечĕ «Шкулпа çемье» ятлă стена хаçачĕ кăларнă.

Шкул директорĕ И. Вязов юлташ пухăннисене шкул ĕçĕсем çинчен, ытти учительсем ачасене вĕренӳре пулăшасси çинчен, шкул ачисен гигиени çинчен каласа пачĕç.

Юлашкинчен шкулти художествăлла пултарулăх кружокĕн концерчĕ тата кино пулчĕ.

В. ПАВЛОВ.

Шахмат енĕпе РСФСР-та мала тухмалли зонăри ăмăрту

Çиччĕмĕш турта виçĕ сехет иртсенех пилĕк партие выляса пĕтерчĕç. Игумновпа Кубарев пӳрĕ те 18 хут çеç сӳрерĕç. Мастер кандидачĕ Хавскипе Алексеев, Козловпа Алешин вылянă партисем те çавăн пекех нихăшĕ те çĕнтерейменнипе пĕтрĕç.

Мастер кандидачĕ Волошин Чугуновран питĕ хăвăрт выляса илчĕ. Çак вăйă вĕçленес умĕн Волошинăн пĕр ытлашши пешка пулнă. Çакă ăна çĕнтерме май пачĕ те ĕнтĕ.

Мастер кандидачĕ Сергиевскипе Стрекаловский вылянă парти интереслĕ пулчĕ. Икĕ çамрăк шахматист та çине тăрса тăрăшни курăнчĕ. Стрекаловский, шуррисемпе вылякан Сергиевский сӳренине асăрхаса илейменнипе пула, ăнсăртран пĕр фигура выляса ярать. Икĕ хут сӳренĕ хыççăн унăн парăнмалла пулчĕ. Çапла вара Чăваш республикин мастер кандидачĕ татах тепĕр çĕнтерӳ тăвать.

Çак турти чи интереслĕ тата вылянине курма сӳрекенсене кăмăла кайнă парти вăл мастер кандидачĕ Новопашинпа Чăваш АССР чемпионĕ Никитин вылянă парти пулчĕ. Никитин, пешка выляса илсе, фигурăсемпе лайăх сӳремелле туса хучĕ. Унтан вăл, кĕске вăхăтлăха ферзь выляса ярса, конь вырăнне ладья тата икĕ пешка выляса илчĕ. Нумаях та мар вăхăт иртнĕ хыççăн Новопашин хăй парăнни çинчен пĕлтерчĕ.

Дамскипе Мари АССР-ĕн чемпионĕ Гизатуллин вылянă парти нихăшĕ те çĕнтерейменнипе пĕтрĕ.

Саккăрмĕш турта халиччен турнирта малта пыракансем пурте çĕнтерӳ турĕç.

Алексеевпа Алешин партийĕнче сицилианская защита текен вариант, шуррисем пешка выляса ямалли, вариант пулчĕ. Алексеев, хăйĕн фигурисене активлăн сӳретме тытăнса, икĕ слонпа тапăнса вылямалла туса хучĕ. Алешинăн, темĕнле тăрăшсан та, çĕнтерӳ тума май килмерĕ.

Чăваш республикин представителĕсем Чугуновпа Никитин вылянă партире защита Нимцовича текен вариант пулчĕ. Чугунов ытлашши пĕр пешка выляса илме пултарчĕ. Анчах вăл каярахпа ытла васканине пула парти нихăшĕ те çĕнтерейменнипе вĕçленчĕ.

Кубарев — Стрекаловский партийĕнче, шуррисем, пешка выляса илсе, çĕнтерме лайăх майсем туса пачĕç. Стрекаловский вăйă вĕçленес умĕн уйрăмах тăрăшни курăнчĕ. Юлашкинчен Кубаревăн, пĕр ытлашши фигурăпа пешка пулчĕ пулин те, ăна çĕнтерме май килмерĕ.

Мастер кандидачĕ Сергиевский хăйĕнпе вылякан çамрăк шахматиста Гизатуллина çĕнтерчĕ. Çакна май вăл турнирта малта пыракансемпе танлашрĕ.

Мастер кандидачĕ Радченко Дамские çĕнтерчĕ.

Хавскипе Петров ун чухне хăйсен партине выляса пĕтерейменччĕ. Тепĕр чухне выляса пĕтерме хăварнă партире Петровăн çĕнтерме шанăç пур.

Игумнов, мастер кандидачĕпе Волошинпа вылянă чухне, король сывăхĕнчи пешкăсемпе сӳреме тытăнчĕ те, Волошина хăйĕн королĕ çине тапăнма май туса панине асăрхаймарĕ. Волошин пешка выляса илчĕ. Ăна малашне вылява йывăрлатас шутпа Игумнов хăйĕн фигурине сĕнчĕ. Анчах та Волошин ăна илмерĕ. Игумнов парăнни çинчен пĕлтерчĕ. Новопашин Козловран выляса илчĕ.

Сакăр тур хыççăн Чăваш АССР чемпионĕ Никитин, мастер кандидачĕсем Сергиевскипе (Чăваш АССР-ĕнчен) Волошин (Тутар АССР-ĕнчен) тата пĕрремĕш разрядри шахматистсем Алексеевпа (Архангельск) Кубарев (Горький хули) малта пыраççĕ. Вĕсем 5,5-шер очко пухнă.

Пĕлтерни

Февралĕн 7-мĕшĕнче, каçхине 7 сехетре, КПСС Шупашкар хула комитечĕн библиотекинче (Урицкий урамĕ) политикăлла экономие тата конкретлă экономикăна вĕренмелли кружоксен тата семинар групписен руководителĕсен пĕр-пĕрин ĕç, опычĕпе паллашас шутпа семинар пулса иртет.

КПСС ХУЛА КОМИТЕЧĔ.

Редактор заместителĕ **П. Н. НИКОЛАЕВ.**

Совет Союзĕн пулă карапĕсене Норвеги влаçĕсем тытса чарнă пирки

Çапла пĕлтерĕччĕ: Норвеги тинĕсĕнче Совет Союзĕн сельдь тытса сӳренĕ темиçе карапне Норвегин хурал тăракан суднисем тытса чарнă. Совет Союзĕн тытса чарнă суднисен капитанĕсене Норвегин пулă тытмалли зонин чикки урлă каçса кĕнĕшĕн айăпласа каланă.

Февралĕн 1-мĕшĕнче Норвегин Мускаври посольстви СССР Ют çĕршыв ĕçĕсен министерствине нота янă, Норвеги çыранĕ патĕнче Совет Союзĕн пулă тытакан 13 карапне Норвегин пулă тытмалли зонинче законсăр йĕркепе пулă тытса сӳренĕшĕн тытса чарни çинчен пĕлтернĕ, Норвегин пулă тытмалли зонин чикки урлă çапла каçса кĕнине хирĕç протестленĕ.

Февралĕн 4-мĕшĕнче СССР Ют çĕршыв ĕçĕсен министерстви Норвеги посольствине ответлесе нота ярса панă. Нотăра çапла кăтартса панă: Норвеги влаçĕсем, Совет Союзĕн карапĕсене тытса чарни çинчен пĕлтерсе, Норвегин пулă тытмалли зонин çав суднăсене тытса чарнă вырăнти районĕн чикки çинчен калакан сведенисене илсе кăтартмаççĕ. Çак вăхăтрах Совет Союзĕн влаçĕсем Совет Союзĕн темиçе карапĕн капитанĕсенчен илнĕ сведенисем çакна кăтартса параççĕ: тытса чарнă вăхăтра çав карапсем Норвегин пулă тытмалли зонин тулашĕнче пулнă. Çавăнпа пĕрлех Совет Союзĕн пулă тытакан мĕнпур карапĕсен капитанĕсене суднăсене Норвеги территорийĕн шывĕ çине тата Норвегин пулă тытмалли зонине илсе кĕме юраманни çинчен çирĕп кăтартусем панă. Нотăра малалла çапла каланă: карапсене тытса чарнă районта çанталăк условийĕсем начар пулнă пирки, çавăн пекех карапсене тытса чарнă районта Норвегин пулă тытмалли зонин чиккисене пĕлсе илме йывăр пулнă пирки вĕсем хăш вырăнта пулнине палăртнă чухне Совет Союзĕн хăшпĕр карапĕсен капитанĕсем йăнăш тума пултарнă. Çапла ĕнтĕ, кунта Совет Союзĕн карапĕсем Норвеги шывĕ çине юриех кĕни çинчен мар, совет карапĕсем хăш вырăнта пулнине палăртнă чухне йăнăш пулма пултарни çинчен сăмах пырать, çавăнпа та Норвеги правительствин протест тума сăлтавсем çук. Нотăра Совет Союзĕн шывĕсем çинче Норвегин пулă тытакан карапĕсене пĕр хут çеç мар тытса чарни çинчен, ĕç мĕнле пулнине палăртнă хыççăн çав карапсене Совет Союзĕн влаçĕсем пĕр тăхтаса тăмасăрах, нимĕнле санкцисем те йышăнмасăрах, ирĕке кăларни çинчен аса илтернĕ.

Юлашкинчен нотăра çак хирĕçӳ ăнсăртран тухса тăнă тата пăшăрхантаракан ĕç пулнине кăтартса панă, ăна Совет Союзĕпе Норвеги влаçĕсем, çак ĕçĕн чăн-чăн сăлтавĕсене шута илсе, йĕркелеме пултараççĕ, Совет Союзĕн тытса чарнă пулă суднисене пĕр тăхтаса тăмасăрах ирĕке кăларма Норвеги правительстви кирлĕ мерăсем йышăнассине шанса тăратпăр, тенĕ.

Хулари тата республикăри экрансем çинче

Хроникăлла-документла çĕнĕ фильм

„ПЕСНИ НАД ВИСЛОЙ"

(Пĕтĕм тĕнчери çамрăксемпе студентсен Варшаври 5-мĕш фестиваль участникĕсен концерчĕ)

кăтартма пуçлаççĕ.

Сценарисчĕсем: А. Аджубей, Б. Иванов.

Режиссерĕсем: И. Посельский, Е. Боссак, Р. Григорьев, И. Копалин.

Музыка тĕлĕшĕнчен йĕркелепĕ А. Ройтман.

Документла фильмсен Ĕçлĕх Хĕрлĕ ялав орденлĕ Центральнăй студийĕ (Мускав), документла фильмсен студийĕ (Варшава) 1955 çулта туса кăларнă.

Театр

ЧĂВАШ АКАДЕМИ ТЕАТРĔНЧЕ февралĕн 7-мĕшĕнче вырăсла спектакль «Несчастный случай», февралĕн 8-мĕшĕнче чăвашла спектакль—«Асран кайми кунсем».

Часах вырăсла спектакль «Кремлевские куранты» кăтартма пуçлаççĕ.

Спектакльсем 19 сехет те 30 минутра пуçланаççĕ.

КИНО

«РОДИНА». Февралĕн 7-мĕшĕнче 10. 12, 14 сехетсенче пуçланакан сеанссенче çĕнĕ илемлĕ кинокомеди «Хитрость старого Ашира», 16, 18.15, 20 тата 22 сехетсенче пуçланакан сеанссенче Францире кăларнă çĕнĕ илемлĕ фильм «Идол» кăтартаççĕ.

«УДАРНИК». Февралĕн 7-мĕшĕнче илемлĕ фильм (çĕнĕ копи) «Петербургская ночь» кăтартаççĕ. Сеанссем 18.15, 20.15, 22.15 сехетсенче пуçланаççĕ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редактор—0-67, редактор заместителĕ—4-17, ответлă секретарь—4-26, секретариат—7-32, промышленность пайĕ—5-74, информаци пайĕ—13-87, парти пурнăç пайĕ—3-99, обзорсен пайĕ—6-84, пропаганда пайĕ—5-21, ялхуçалăх пайĕ—3-97, культура пайĕ—3-04, совет строительстви пайĕ—3-04, литературăпа искусство пайĕ—8-61, çырусен пайĕ—3-54, издательство кантурĕ—0-83.

НТ 01249 Типография № 1 Министерства культуры Чувашской АССР. Заказ № 573. Тираж 37.000 экз.